Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
ЯНВАР
1
ШАМАТКУН
1 (4814)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

20-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Пайан пирĕн çĕршыв Сталинла виççĕмĕш пилĕкçуллăха кĕрет
ÇĔНĔ ÇУЛ ЙАЧĔПЕ, ЙУЛТАШСЕМ!

1938 çулта тата та пысăкрах çĕнтерÿсем тăвар

Епер епĕр кивĕ—1937 çулпа сывпуллашса çĕнĕ—1938 çула савăнăçлăн кĕтсе илтĕмĕр.

Мухтавлă ĕçлерĕ иртнĕ çулта совет çĕршывĕ. Совет Сойузĕн историне питĕ те паха страницăсем çырса хучĕç иртнĕ çулта социалисăмла çĕршывăн халăхĕсем. Тăрăнăн савăнса аса илессĕ совет çыннисем йулашки вуникĕ уйăх хушшинче пулса иртнĕ ĕçсене.

1937 çул Сталинла Конституцин пĕрремĕш çулĕ пулчĕ. Социалисăмăн аслă саккунĕ пирĕн халăхăн пурнăçне кĕчĕ, совет гражданинĕн пурнăçĕнчи тĕп саккун пулса тăчĕ.

1937 çулта пĕтĕм халăх Октаберти социалисăмла Аслă революцин 20 çулхи праçникне уйавласа иртерчĕ. Ку вăл пысăк савăнăçлă праçник, пысăк нахалăхлă праçник пулчĕ. Çак йубилейлă çулра епĕр ĕççыннисем, большевиксен партийĕ йертсе пынипе, утса тухнă çула пăхса тухрăмăр, совет власĕ çирĕм çул пурăннин итогĕсене палăртрăмăр. Çав итогсем вара ССРС ĕççыннисем пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинче коммунисăм çĕнтерессине пĕр пăркаланмасăр çулăмлăн ĕненессине татах вăйлăраххăн çирĕплетрĕç.

1937 çул етемлĕхĕн историйĕнче тĕнчере чи пирвайхи хут Аслă Совета Сталинла Конституци тăрăх чăннипех ирĕклĕн те чăннипех демократилĕн суйланин çулĕ пулса йаланлăхах асра йулĕ. 1937 çулта декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ирĕклĕ совет халăхĕ пĕтĕм тĕнчене вăл хăй Ленин—Сталин партийĕн йалавĕ тавра çирĕппĕн пĕтĕçнине, хăйĕн политикăла тата моралĕ пĕрлĕхне никам та çĕмĕрме пултарас çуккине кăтартса пачĕ. Декабĕрĕн 12-мĕш тĕлĕнмеле кунне епĕр, кашни çын хăйĕн пурнăçĕнчи чи лайăх кунсене асра тытнă пек, пысăк йуратупа асра тытăпăр.

1937 çул совет халăхĕ тунă пĕтĕм тĕнчипе паллă историлĕ çĕнерÿсен çулĕ пулчĕ. Етемлĕх историнче чи пирвайхи хут сывлăш карапĕсен ескадрийĕ Çурçĕр полюсĕ çине пырса ларчĕ, куçса çÿрекен пăр çине тăватă совет учонăйĕсене антарса хăварчĕ. Пĕтĕм тĕнче ĕççыннисем хăйулă тăватă паттăрсен хастарлăхĕпе тата çирĕплĕхĕпе тĕлĕнсе çĕкленессĕ, пирĕнне пĕрле вĕсене çĕнĕ çулта хăйсен йаланхи пек мар паттăр çулçÿревне телейлĕн туса иртерме сунаççĕ.

Историре чи пирвайхи хут Совет Сойуз геройĕсем Чкаловпа Громов хăйсен йулташĕсемпе пĕрле полюс урлă Мускав—Çурçĕр Америкă сывлăш трассине хывçĕ, икĕ материка чи кĕске çулпа çыхăнтарчĕç. Иртнĕ çул совет авиацийĕн рекордсен çулĕ пулчĕ. Совет летчикĕсем тÿррĕмĕн инçе вĕçес тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчери абсолютлă рекорда хăйсен аллине илчĕç тата грузсемпе хăвăрт, инçе, çÿле вĕçес тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчери авиацире 30 рекорд илчĕç.

1937 çулта, Кренкель полярник илемлĕн калана пек каласан, çĕршер те пиншер стахановецсем, хăйсен полюсĕсене алла илчĕç. Гудов йулташ станкостройенире тата нумай гудовсем шахтăсенче, домнăсенче, транспорт çинче, çăмăл тата апат-çимĕç промышленнăçĕнче производствăлă çула питех те паха стахановла ÿсĕмсемпе вĕçлерĕç.

ССР Сойузĕн пĕтĕм тĕнчипе чи пултарта чи нумай машинăлă йалхуçалăхĕнче колхозлă строй питĕ паха йенĕсене калама çук вăйлăн кăтартса пачĕ. Иртнĕ йалхуçалăх çулĕ чечеклĕ, пĕтĕм вăйĕпе танса тăракан, тухăçлă çул пулчĕ. Вăл совет çĕршывне 7 мĕлйарда йахăн пăт тырă пачĕ.

1937 çул çĕршыва сутакансене, предателсене, троцкисла-бухаринла шпионсене, фашисăм агенчĕсене хайаррăн та татăклăн çапса çĕмĕрнин çулĕ пулчĕ. Иртнĕ çул пире революцилĕ сыхăлăха çÿле тытма тата халăхăн хайар тăшманĕсемпе пĕр хĕрхенмесĕр кĕрешсе пыма вĕрентет. Тăшмансене пĕр шелле месĕр çĕмĕрсе пымала! Вĕсене пĕтермеле, пурне те пĕр çын йулмиччен! Халĕ лăпланса ларма ир-ха, анчах иккеленмели çук,—епĕр хамăр çĕршыва троцкисла-бухаринла шпионсен тăшманла тĕп йăвисенчен тасатнă хыççăн,—совет гражданинне сывлама çăмăлрах та ирĕклĕрех пулса тăчĕ.

ССР Сойузĕнче пурнăç тата лайăхрах та савăнăçлăрах пулса тăчĕ. Çĕнĕ, вăйлă та шавлă йурăсем йурлать пирĕн халăх, çĕнĕ ĕçсем тăвать пирĕн çĕршыв, çĕнĕ мухтавлă ывăлсемпе хĕрсем ÿстерет вăл тăван çĕрĕн мухтавлăхĕшĕн.

1937 çул совет çыннисем халиччен пулман пек вăйлăн ÿснипе паллă пулса йулчĕ. Большевиксен партийĕ пăхса ÿстернĕ, рабочисемпе хресченсем хушшинчен ÿстерсе çĕкленĕ пиншер çĕнĕ руководителсем! Лайăххисенчен лайăххисене—коммуниссемпе партире тăманнисене—халăх ССРС Аслă Советне суйларĕ. Пĕтĕм вăйа хурса ĕçлекенсене, хăйулă боецсене çĕршерĕн орденсем парса награлаланă. Сталинла, социалисăмла демократисăмăн çĕршывĕнче кăна çĕнĕ çынсем, çĕнĕ талантсем çакăн пек хăвăрттăн та тăвăллăн ÿсеççĕ.

Пирĕншĕн питех те ырă пулчĕ кивĕ çул, савăнпа та ĕнтĕ епĕр çĕнĕ 1938 çула уйрăмăнах савăнăçлăн тата шанчăклă кĕтсе илетпĕр. Пире кризис, ĕççĕрлĕх, выçлăх хăратмасть, пирĕн чикĕсене Хĕрлĕ çар, тĕнчере чи вăйлă çар, сыхласа тăрать, епĕр тăшман, кирек-йепле тапăнсан та отпор пама хатĕр, епĕр ыранхи кун лайăхрах пуласине шанатпăр.

Урăхла ĕç тăрать чикĕ леш йенче, капиталисăмла çĕршывсенче. Йапони генералĕсем çĕршер пин хресченсемпе рабочисене вилме вăрçă каларса йачĕç. Вĕсенчен нумайĕшĕ вальли çĕнĕ çул çĕнĕ хĕнхурсем йе тата вилĕм те илсе килет. Испанипе Китайра вăрăхурахла вăрçă туса пыракан фашисла агрессорсем мĕлйуншар çынсене выçлăхпа вилĕм патне илсе пыма çĕнĕ провокацисем хатĕрлеççĕ.

Епĕр, совет çыннисем, пуласлăх çине шанчăклăн та савăнăçлăн пăхатпăр.

Сталин йулташ—çулпуç, учител тата йуратнă тус йертсе пынипе,—ушăн епĕр пурте хамăрăн çĕнĕ çулти пĕрремĕш тоста çĕклетпĕр,—совет халăхĕ, Ленин—Сталин партийĕ тавра пĕрлешнĕскер, 1938 çулта татах та пысăкрах çÿлĕшсене çитĕ, çĕнĕ çĕнтерÿсем тăвĕ.

Çĕнĕ çул йачĕпе, йулташсем!

Совет Сойузĕнчи халăхсем çĕнĕ çула кĕтсе илеççĕ

Коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн çĕнтерĕвĕ

1938 çул сывхарса çитнĕ вăхăтра пирĕн хăватлă социалисăмлă тăван çĕршыв пит те пысăк хаваслăхпа, пĕтĕм халăх пĕр шухăшлă пулнипе, çĕршыв власĕн аслă оргăнне—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйларĕ.

Аслă Совет депутачĕсем—Совет халăхĕн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсем. Вĕсем—рабочисем, хресченсем, интеллигентсем, мухтавлă Хĕрлĕ çарăн боецĕсемпе командирĕсем. Аслă Совета 1143 депутат суйланă. Вĕсенчен 855 коммунис, 288 партире тăманнисем.

Совет халăхĕн пĕрремĕш депутачĕ, ĕççыннисен йуратнă çулпуçĕ, çĕнĕ Конституцин генилĕ творецĕ Сталин йулташ. Аслă Совет депутачĕсем пурте коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем.

Ленин—Сталин партишĕн пĕтĕм совет халăхĕ сасăларĕ.

ССР Сойузĕ миршĕн кĕрешес ĕçре

„Сйес çакна палăртать: Сталин йулташ йертсе пынипе Совет Сойузĕ мир политикине, хăйĕн промышленнăçĕпе çар вăйхăватне тĕреклетес политикăна çирĕп тытса пырса, республикăлă Испание пĕр шухăшлă пулса, пĕтĕм тĕнчере вăрçă пуçланас хăрушлăха сирме пулăшать.

Францири коммунисен партин 9-мĕш сйесĕ Ленинпа Сталин хывнă ирĕклĕхпе, мир çулĕпе пыма хăйĕн çине обйазателствă илет" (Францири коммунисен партин 9-мĕш сйесĕ 1937 çулти декабĕрĕн 26-мĕшĕнче Сталин йулташ патне йанă саламлă телеграммăран).

Совет халăхĕн никам çĕнтерейми çарĕ

1937 çулта çар округĕсенче иртернĕ маневерсемпе тактикăлă вĕренÿсем пирĕн Хĕрлĕ çар малта тăракан çар техникипе хĕçпăшалланнине, Ленин—Сталин партийĕ тавра таччăн пĕрлешсе тăнине, ăна пĕтĕм халăх йуратнине, вăл тăшмансене çĕнтерме кирлĕ искусствăна лайăх пĕлнине кăтартрĕç.

Советăн мухтавлă разведки

1937 çулта чи лайăх наркомвнуделцăсене, тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕсене, совет халăхĕ чĕререн йуратакан совет разведкинче ĕçлекенсене ССР Сойузĕн орденĕсене парса награлаланă. Совет разведкин мухтавлă руководителне Николай Иванович Йежов йулташа правителствă постановленийĕ тăрăх Ленин орденĕ панă.

Совет Сойуз халăхĕ

1937 çулта, Совет Сойуз халăхĕн класлă составне сăнаса шута илсе тухнă. Халăхăн 34,7 процентĕ—рабочисемпе служăщисем, 55,5 процентĕ колхоз хресченĕсемпе кооперациленнĕ алăстаçсемпе ремесленниксем, 5,6 процентĕ йединоличниксемпе кооперацине пĕрлешмен ĕççыннисем, ремесленниксем, ыттисем—пенсионерсем 4,2 процент.

Йевропăра пĕрремĕш вырăнта

Совет власĕ пуличчен вара ССР Сойузĕ хăватлă индустрилĕ çĕршыв пулса тăчĕ. 1913 çулхи производствă хисепĕнчен епĕр 1936 çулта 7,3 хут иртсе кайнă.

1937 çулта промышленнăç продукцийĕ çĕнĕрен чылай ÿсрĕ. 1938 çулта Совет Сойуз Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă решени тăрăх, пĕтĕм сойузлă, сойузлă-республикăлă халăх комиссариачĕсен промышленнăçĕсен, вырăнти промышленнăç халăх комиссариачĕсен (ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи хатĕрлев комитечĕн продукцийĕпе пĕрле) 1937 çултипе танлаштарсан 15,3 процент ÿсмеле. Пĕр çул хушшинче промышленнăç продукцийĕ çакăн пек хăвăртлăхпа ÿснине тĕнчере пĕр капиталисăмла çĕршыв та пĕлмен, пĕлмест те.

Колхоз хресченĕсем

Совет Сойузĕнче 1937 çулта 243 пин ытларах колхоз пулнă. Вĕсенче 18,5 мĕлйун хуçалăх пĕрлешсе тăрать. Йединоличниксем 1,4 мĕлйун кил çеç йулнă. Колхозсĕм аллинче пĕтĕм акмали çĕр лаптăкĕнчен 99,1 процентĕ тăрать. Колхозсем малта пыракан машинăлă техникăпа хĕçпăшалланнă. Колхоз уйхирĕсенче 357 пин трактор, 97 пин комбайн, 66 пин грузовик ĕçлет. Вĕсем МТС-сен аллинче тăраççĕ.

Халиччен курман вăйлă тырпул

1937 çулта Совет Сойузĕнче пустарса илекен пĕтĕм тырпул 7 мĕлйард пăта çитет. Вăйлă тырпул туса илме коллективлă ĕç, уй-хирте стахановла ĕçлени, уй урлă апасене пĕтерни, çĕнĕ машинăна агрономи техники çĕре лайăхрах майсемпе ĕçлени май пачĕ.

Халăх апат-çимĕç, тавар илесси ÿссех пырать

1937 çулти 12 уйăх хушшинче Совет Сойузĕнче ваккăн суту-илÿ оборочĕ (пĕрле апатланассипе пĕрле шутласан) 125 мĕлйард тенкĕ пулать. 1936 çулта 106 мĕлйард тенкĕ пулнă.

700 мĕлйун тенкĕ тирпейлĕх

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, сĕс-кантăртан тата çăмран тĕртсе тунă пир-авăр, атă-пушмак, супăнь, одеколон тата ыттисен хакне йÿнетнĕ. Çак таварсене йÿнетнипе тавар илекенсем çурçул хушшинче 700 мĕлйун тенкĕ укçа тирпейленнĕ.

Большевиксем Çурçĕр полюсне çĕнсе илчĕç

Отто Йулйевич Шмидт йулташăн сывлăшри паттăр експедицийĕ, Водопйанов, Молоков, Алексейев, Мазурук йулташсем йертсе пынипе, партипе правителствăн заданине пит те чаплăн пурнăçа кĕртрĕç. Çурçĕр полюсĕнчен 20 километр иртсе вĕçсе кайса пăр çине анса ларнă. Експедици пăр çине совет тĕпчевçисен паттăр çыннисене—Папанин, Кренкел, Ширшов, Федоров йулташсене антарса хăварнă. Пăр çинче куçса çÿрекен „Çурçĕр полюс станци" 8 уйăха йахăн ĕçлет ĕнтĕ. Халĕ вăл „Станци" Гренланди çыранĕсем патĕнче ишсе çÿрет.

Авиаци рекорчĕсем

Чкалов, Громов йулташсем — Совет Сойузĕн геройĕсем йертсе пынă йумахри пек самолет екипажĕсем, авиаци историне тĕлĕнмеле çитĕнÿсем çырса хучĕç. Пирĕн çĕршывăн мухтавлă соколĕсем Мускавран Çурçĕр полюсĕ урлă Çурçĕр Америкăна вĕçсе каçса пирĕн летчикĕсемпĕн нимĕнле чăрмав та çуккине кăтартса пачĕç. Советсен çĕршывĕ хăйĕн аллинче тĕнчери авиаци рекорчĕсенчен 27-шне тытса тăрать.

Совет Сойузĕн геройĕсем

Государствă умĕнче пуриншĕн те палăрмала ĕç тунăшăн, паттăрла ĕçсем тунăшăн хамăр çĕршывăн 63 хăравçăсăр паттăр ывăлĕсене правителствă Совет Сойузĕн геройĕсен йатне панă. Вĕсенчен нумайĕшĕ 1937 çулта Совет Сойуз Геройĕсен йачĕсене илнĕ. Вĕсенчен—Çурçĕр полюсне кайнă експедицинче пулнисем 8 çын, авиаци историнче халиччен пулман маршрутпа—Мускав — Çурçĕр полюсĕ — Çурçĕр Америкă маршручĕпе вĕçнисем 2, нумайĕшĕ—Совет Сойузĕн оборонă тĕрекне çирĕплетес тĕлĕшпе правителствă панă заданисене пурнăçа кĕртнĕ чухне паттăрлăх кăтартнă рабочисемпе хресченсен Хĕрлĕ çарĕн командирĕсем.

40 мĕлйун çын вĕренет

Совет Сойузĕнче 1936—1937 çулти вĕренÿ çулĕнче 28.840 пин ача пуçламĕщ тата вăтам шкулсенче вĕреннĕ, ситĕннисене вĕрентекен шкулсенче 8.942 пин çын, аслă шкулсенче 542 пин çын. Пирĕн çĕршывра пурĕ 40 мĕлйун çын ытла вĕренет. Совет Сойузĕнчи пур шкулсенче те укçасăрах вĕрентеççĕ. Студентсене паракан стипендийе çĕнĕрен чылай ÿстернĕ.

1937 çулта халăха вĕрентес ĕçе Совет Сойузĕнче 18 мĕлйард тенкĕ ытла укçа панă.

Совет музыкĕн тĕлĕнмеле çитĕнĕвĕ

Совет музыканчĕсем кăçалхи çул пианиссен Шопен йачĕпе Варшавра пулса иртнĕ тĕнчери виççĕмĕш конкурсĕнче, скрипачсен тĕнчери конкурсĕнче пит те пысăк çĕнтерÿсем турĕç.

Çуралакансен шучĕ ÿсрĕ

Совет çĕршывĕнче çуралакансен шучĕ пĕрмайах ÿссе пырать. Çапла, сăмахран, Ленинград хулипе Ленинград облаçĕнче 1937 çулăн малтанхи сурмаçулĕнче совет çĕршывĕн çĕнĕ гражданĕсем 127 пин çын çуралнă. Иртнĕ çулта çак вăхăтрах 85 пин ача çуралнă пулнă.

Нумай ачалă амăшсене пособи

Кăçалхи çул нумай ачалă ача амăшсене пĕр мĕлйард тенке йахăн пособи панă.

ССР Сойузĕн Çарпа Тинĕс ĕçĕсен халăх комиссариатне тăвасси çинчен

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăнаççĕ:

1. Çарпа тинĕс ĕçĕсен Пĕтĕм Сойузлă Халăх Комиссариачĕ тăвас.
2. Çарпа Тинĕс Халăх Комиссариат аллине Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн тинĕс вăйĕсене парас, вĕсене ССР Сойузĕн Оборонă Халăх Комиссариачĕн составĕнчен уйăрас.
3 ССР Сойузĕн Çарпа Тинĕс Халăх Комиссарĕн пилĕк кун хушшинче ССР Сойузĕн Çарпа Тинĕс ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн положенипе структурине çирĕплетме ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советне пройект тăратмала.

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ М. Калинин.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ В. Молотов.

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ А. Горкин.

Мускав, Кремль,
1937 çулти декабĕрĕн 30-мĕшĕ.

П. А. Смирнов йулташа ССР Сойузĕн Çарпа Тинĕс ĕçĕсен халăх комиссарне çирĕплетесси çинчен

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет йышăннă постановлени

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет çапла йышăнать:

ССР Сойузĕн Çарпа Тинĕс Халăх Комиссарне — пĕрремĕш рангăла çар Комиссарне Смирнов Петр Александрович йулташа—çирĕплетес, ăна ССР Сойузĕн Оборонă Халăх Комиссарĕн заместителĕнчен тата Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн Политуправлени начальникĕн ĕçĕсенчен хăтарас.

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ М. Калинин

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ А. Горкин.

Мускав, Кремль,
1937 çулти декабĕрĕн 30-мĕшĕ.

Л. З. Мехлис йулташа ССР Сойузĕн Оборонă Халăх Комиссарĕн заместителне тата Рабочисемпе Хресченсен Хĕрле Çарĕн политуправлени начальникне çирĕплетесси çинчен

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет йышăннă постановлени.

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет çапла йышăнать:

Лев Захарович Мехлис йулташа ССР Сойузĕн Оборонă Халăх Комиссарĕн заместителне тата Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн политуправленин начальникне çирĕплетес.

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕ М. Калинин.
ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ А. Горкин.

Мускав, Кремль,
1937 çулти декабĕрĕн 30-мĕшĕ.

Америкăри ĕççĕрлĕх

НЬЮ-ЙОРК, декабĕрĕн 29-мĕшĕ. 1937 çулхи йулашки уйăхĕсем Америкăсен Пĕрлешÿлĕ Штачĕсенчи „економикăна ура çине тăратасси" арканни çинчен калаççĕ. Сентабĕр уйăхĕнче производствă, уйрăмăнах йăвăр промышленнăçра, 1929 çулхи економикăлă кризисăн пĕрремĕш тапхăрĕнче пулничен те ытларах, сисĕнмеле хÿкни пулать. Производствă ÿксе пыни йулашки иртнĕ 3 çул хушшинче тунă çитĕнÿсене пĕтĕмпех цетерсе лартасси патне çитичченех тата производствăна 1934 çулхи виçене çитиччченех каçала илсе пынă.

Хурçă промышленнăçĕ çу тăршĕнче производствă вăйхăвачĕн сакăрвун процентне ĕçлеттернĕ пулсан, халĕ 19 процентне çеç ĕçлеттернĕ.

„Дженерал Моторс" автомобил фирми пайан нумай автомобилсене сутаймасан пирки, ернере 3 кун анчах ĕçлет, тата тепĕр 30.000 рабочийе ĕçрен кăларать, тесе пĕлтернĕ. Фирмă октабĕр уйăхĕнчен пĕтĕмпе 60.000 рабочийе ĕçрен кăларнă.

„Дженерал Моторс" фирми пĕлтернĕ тăрăх, ку тариччен производствăна чакарни автомобил промышленнăçне кăшт çеç тивнĕ.

1937 çул пиншер ĕççĕр ларакан кăшт çеç ĕçлекен предприйатисем пуррипе тата çĕршывра сахалтан та вуни мĕлйун ĕççĕррисем пуррипе иртет.

Пирӗн вӑй, пирӗн хӑват

Пайан ҫӗнӗ ҫул календарӗн пӗррӗмӗш лӑҫӗ, шанчӑкӗ. Сталин — ҫӗнӗ Конститрамницӗне уҫатпӑр. Ҫирӗмпӗррӗмӗш ҫул тупние.—ССР Сойузӗн тӗп саккунне—курӑнатпӑр епӗр социалисӑмла ҫӗршывра—пурӑнӑмӑрта хамӑрӑн тӑван ҫӗршыва нейох ҫамрӑк, хӑватлӑ, тӗреклӗ, вӑйлӑ.

Пирӗн ҫӗршывӑн хуҫи—рабочисемпе хресченсем. Вӗсем хӑйсен вӑйӗпе, хӑйсен пултарулӑхӗпе, кунран-кун ӳссе пыракан, никӑҫан та иксӗлми хастарлӑхпа хуларп тата йалти ӗҫсынисен социалисӑмла обществине туса ҫитерчӗҫ. ССР Сойузне мухтава кӑларса вӑйлӑ, пӗррӗмӗш класлӑ техникӑпа хӗҫпӑшалланнӑ хӑватлӑ индустрилӗ, никам пырса тӗкӗнейми пысӑкран та пысӑк, ҫирӗпрен те ҫирӗп колхозлӑ ҫӗршыв туса ҫитерчӗҫ, хӑйсен пӗтӗм чӗререн йуратакан Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарне туса, ӑна хӑватлӑ техникӑпа хӗҫпӑшаллантарса ҫирӗплетрӗҫ.

Ҫакӑнта ӗнтӗ пирӗн вӑй, пирӗн хӑватлӑх.

Пирӗн ССР Сойузӗнчи нумай мӗлйунлӑ тата нумай нацилӗ халӑх—пӗр ҫемйери пек пӗрлӗхлӗ, пӗртан правалӑ, пӗртан хисеплӗ. Ҫак пуйан та куԓтурӑлӑ пурӑнакан ҫемйерен кашни купах ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ маттурсем, ӗҫре хӑйсен пултарулӑхне кӑтартакан геройсем, стахановецсем, кривоносовецсем пинӗ-пинӗпе ӳсеҫҫӗ. Пирӗн ҫӗршыва пӗтӗм тӗнчери ӗҫсынисем пӗтӗм чӗререн йуратаҫҫӗ, ӑна пулӑшма йаланах хатӗр.

Ҫакӑнта ӗнтӗ пирӗн вӑй, пирӗн хӑватлӑх.

Пирӗн социалисӑмла государствӑна халӑхран тухнӑ, халӑх пӑхса ҫитӗнтернӗ, халӑхран вӗреннӗ, халӑх кӑмӑлӗпе, ӗмӗчӗпе тата пӗтӗм чӗрери йуратувӗне суйланӑ сынсем йертсе пыраҫҫӗ. ССР Сойузӗнчи 170 мӗлйун сынлӑ ҫемйерен чи тивӗҫлисене, Ленин—Сталин парти ӗҫне чӗререн йуратса пурнӑҫа кӗртсе пыракансене, ӗҫхалӑхсен телейӗшӗн, пуйан та савӑнӑҫлӑ пурнӑҫӗшӗн ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлекен сынсене—ССР Сойузӗн Аслӑ Советне 1143 депутат суйланӑ. Пирӗн ҫӗршывӑн ҫулпуҫӗ вилӗмсӗр В. И. Ленин пулнӑ, халӗ унӑн чи шанчӑклӑ соратникӗ И. В. Сталин йулташ пур.

Ҫакӑнта ӗнтӗ пирӗн вӑй, пирӗн хӑватлӑх.

Сталин — ку хурҫӑ пек ҫирӗп ҫулпуҫӗн йачӗ. Ку йата ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинчи пур чӗлхепе те асӑнаҫҫӗ. Сталин,—вӑл етемлӗхӗн телейӗ, вӑл кӗрешӳн тата ҫӗнтерӳсен йалавӗ, вӑл пӗтӗм етемлӗхӗн пулас лӑҫӗ, шанчӑкӗ. Сталин — ҫӗнӗ Конституцине.—ССР Сойузӗн тӗп саккунне—ыттӑн саспаллисемпе ҫырса пачӗ, пӗтӗм тӗнчери ӗҫсынисене пусмӑрлӑхран, чухӑнлӑхран тата праваҫӑрлӑхран ирӗке тухма ҫул кӑтартса паракан Конституцине туса пачӗ.

Ҫакӑнта ӗнтӗ пирӗн вӑй, пирӗн хӑватлӑх.

Пирӗн социалисӑмла ҫӗршыв тӗреклӗнсе, хӑватланса, пуйанланса тата куԓтурӑланса пыни, капиталисӑмла ҫӗршывсене тулӑштарать. Вӗсем, фашисла агрессорсем, троцкисла-бухаринла тата буржуалла нацифналисла бандитсем ҫине тайанса, шпионла, сӑтӑрла тата террорисла ӗҫсем туса ССР Сойузӗн тӗреклӗхне, унӑн хӑватлӑхне хавшатма, пирӗн ӗҫсынисен телейлӗ пурнӑҫне кайала туртса илсе пусмӑрлӑх, чухӑнлӑх тата праваҫӑрлӑх чуралӑхне тавӑрма шутланӑ. Аслӑ Сталин пӑхса ӳстернӗ наркомвнуделԓцӑсем, хӑйсен сталинла Наркомӗ Н. И. Йежов йулташ йертсе пынипе, халӑхсен тискер тӑшманӗсене аркатса пӑрахрӗҫ, тымарӗпех кӑкласа пыраҫҫӗ.

Ҫакӑнта ӗнтӗ пирӗн вӑй, пирӗн хӑватлӑх.

Ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинчи чи ҫӳлӗ, Сталин йачӗпе хисепленекен Пик—пирте, ӑна пирӗн чаплӑ аԓпинисcем ҫӗнтерсе илнӗ. Ҫурҫӗр поԓусне ҫӗнтерекенсем—пирӗн ԓотчиксем. Ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинчи чи чаплӑ метро—пирӗн метро. Пӗлӗтӗн чи ҫӳлти сийӗ—пирӗн, ӑна пирӗн стратонавтсем ҫӗнтерсе илнӗ. Чи тарӑн тинӗс—пирӗн тинӗс. Хӑварт, ҫӳлерех тата лайӑхрах вӗҫекен ԓотчиксем — пирӗн ԓотчиксем. Шывра лайӑх ишекенсем, рекордла чупакансем, сикекенсем, футболла выԓӑкансем, хастарлӑн вӗренекенсем, ҫутҫанталӑка парӑнтаракансем, вӗсем пурте—пирӗн.

Ҫакӑнта ӗнтӗ пирӗн вӑй, пирӗн хӑватлӑх.

Пайан ҫӗнӗ ҫулӑн пуҫламӗшӗ. Коммунисӑмӑн ҫӗнӗ ҫӗнтерӳвӗсен ҫӗнӗ ҫулӗ. Сана, пирӗн хӑватлӑ та тӗреклӗ ҫӗршыва, сана, пирӗн пуйан та куԓтурлӑ ҫӗршыва, сана, пӗтӗм етемлӗхӗн раскалне, телейлӗ ҫамрӑклӑхӑн ашӑран та ӑшӑ, хӗрӳлӗрен те хӗрӳлӗ пысӑк саламӗ!

Аслӑ Сталин! Сана, халӑхсен ҫулпуҫне, халӑхсен сывӑхран та сывӑх тусне, сана, халӑхсен шанчӑкне, унӑн ӗмӗчӗпе телейне, тӑван ҫӗршыв пек пысӑк, хӗрӳлӗ салам!

Тулли кӑмӑлпа

1937 ҫулта рабочисем, колхозниксем, тӳрӗ ӗҫлекен йединоличниксем, учителсем, врачсем, инженерсемпе техникла работниксем, служащисем тата пӗтӗм ӗҫхалӑхӗ хӑйсен ӗҫӗнче пысӑк ӳсӗм тӳрӗҫ. Ҫӗнӗ ҫула хавасланса тата тулли кӑмӑлпа кӗтемӗр.

1938 ҫулта пирӗн умра татах та пысӑк задачӑсем тӑраҫҫӗ. Тапса вӗрекен пурнӑҫӑн пур участкисенче те—промышленнӑҫӑн предприятисем плансене тултарас, государствӑ умӗнчи обязательстсене пурнӑҫа кӗртес, пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илес ӗҫсенче пуринче те пирӗн стахановла рекордсем тумала, ачасене вӗрентес, коммунисла воспитани парас ӗҫсене пысӑк пахалӑхпа тумала. Хӑшпӗр вырӑнсенче ӗҫ ҫине касоннӑй мӑйсемпе тата бюрократла пӑхнисем те палӑраҫҫӗ. Сӑмахран, вӑрман ӗҫне тумани тата ыт. те.

Шкулсенче те ӗҫ ҫине йӗркӗнчӗкле пӑхнисем пур-ха. Акӑ Кипеҫ йалӗнчи учителница Курицына, шур офицер йулнӑ сынна сыхӑннӑскер, хӑйӗн пӗтӗм вӑйне ачасене воспитани парас вырӑнне темиҫе хутчен те шкултан тухса тарма пӑхнӑ. Ҫав тери хисеплӗ ӗҫе пӑрахса хӑварма тӑнӑ. Ҫаксем вӗсем совета хирӗҫле шухӑпсем, вӑл пирӗн шухӑшсем мар—тӑшмансен шухӑшӗ. Кун пек шухӑшсене пӗтӗмпех кӑкласа пӑрахмала.

Совет Сойузӗнчи кашни тӗрӗс ӗҫлекен гражданин, вӑл тӑвакан ӗҫ—парти ӗҫӗ, пӗтӗм ӗҫхалӑх тата хӑйӗн телейӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫӗшӗн чи кирлӗ ӗҫ пулса тӑнине пӗр минутлӑх та манмала мар. Совет Сойузӗн кашни тӳрӗ те тӗрӗс ӗҫлекен гражданинӗ вӑл—государствӑн чи кирлӗ тата упрӑмлӑ пайӗ пулса тӑрат. Ӗҫе чӑрмантарма тӑрӑшакан—вӑл халӑх тӑшманӗ. Вӗсене сапса аркатса ҫӗмӗрес те, ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсемшӗн мобилизациленме Совет Сойузӗн ӗҫхалӑхӗ хӑйулӑх йаланах ҫитнӗ, малала та ҫитет.

1938 ҫулта ӗҫхалӑхӗ татах та тимлӗн тата хастарлӑн мобилизациленсе халичченхи пулман вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн, ҫитес суракине боԓшевикла хатӗрленес, вӑрман ӗҫӗнче те, уй-хир ӗҫӗнче те, промышленнӑҫӑ предприятисенче те стахановла рекордсем туса пырӗҫ, шкул ӗҫне тимлӗн туса пырӗҫ, нихӑш участкӑсенче те прорывсем пулма памӗҫ,—тесе хытах шанса тӑратӑп.

Совет Сойузӗн Аслӑ Совечӗн депутачӗ

О. Т. Харитонова.

„Боԓшевик" завод виҫҫӗмӗш пйатилеткӑна ҫӗнтерӳлӗн кӗрет

Совет Сойузӗн 20 ҫул хушшинчи ӳсӗмсемпе кӗрешӗвӗ пӗтӗм ӗҫсыннине хавхалантарать. Тӗнчере нихӑш государствӑ та пирӗнни пек производствӑла активлӑха курман, курма та пултараймасть. Пирӗн стахановецсен ӗҫӗсем хамӑран социалисӑмла ҫӗршыва кунран кун вӑйлатса пыма, ҫирӗплетме май параҫҫӗ.

Ҫӗмӗрлери екстракт тӑвакан „Боԓшевик" завод пӗррӗмӗш сталинла пйатилеткӑра ӳссе ҫитӗннӗ. 1938 ҫула вӑл пройектпа пӑхнӑ виҫерен 70 процент ӳсиипе кӗрет. Завод хӑйӗн 1937 ҫулхи промфинпланне нойабӗрӗн 27-мӗшнех тултарнӑ. Завод лайӑх ӗҫлеме, производствӑ планне йаланах ӳстерсе пыма пултарнине кӑтартрӗ. 1937 ҫулта пӗр диффузортан 300—310 килограм тоннида кӑларса пынӑ пулсан, йулашки кунсенче Байков, Спиридонов, Жестков диффузоршчиксем 345 килограм кӑларса пычӗҫ. Пӗтӗм вунӑкунлӑхра завод вӑтамран 320 килограм тоннида туса кӑларчӗ. Ҫакӑнтан палӑ ӗнте, заводри тӗп станци 345 килограм кӑна мар 400 килограм тоннида туса кӑларма пултарать.

Выпаршчиксем: Горбунов, Никифоров т. ыт. те тахҫанах пӗр квадратлӑ метрта сӗткен вӗретессине планра кӑтартнинчен ытлашшипех ирттерсе йанӑ. Сӑмахран, Горбунов йулташ стахановла вунӑкунлӑхра пӗр квадратлӑ метртан 33,9 килограм йуман сӗткенӗ вӗретес вырӑнне 46 килограм вӗретнӗ.

Пирӗн заводӑн 1938 ҫулти тӗп задачӑ вӑл—диффузорсенчен ытларах тоннида туса кӑларассине ӳстересси пулать. Ҫакна пурнӑҫлани, тоннида ытларах кӑларма кӑна мар тата тавар хакне йӳнетет, сырйо расхутлассине те чылай чакарать.

Рабочисем пурте, виҫҫӗмӗш сталинла пйатилеткӑн пӗррӗмӗш ҫулӗнче татах та лайӑхрах ӗҫлесе ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума обйазателствӑсем илеҫҫе.

И. Ланин—Ҫӗмӗрлери „Боԓшевик" заводӑн производствӑ пуҫлӑхӗ, инженер.

Тавӑшкасси куԓтурланать

Тавӑшкасси йалӗ Ҫӗрпӳрен ҫичӗ ҫухрӑмра, сырма-ҫатралӑ вырӑнта ларать. Ӗлӗк вӑл чи куԓтурӑсӑр, тӗттӗм йалсенчен пӗри пулнӑ. Унта 50—60 килӗрен ҫурри ытла хура пӳртсенче пӑчӑхса пурӑннӑ. Тасамар пурӑннӑ пирки йаланах чирпе асапланнӑ. Пуринчен ытла трахом чирӗ нумай сынна суккӑрлатнӑ. Пӗтӗм йалӗпе те сырма, вулама пӗлекен 4—5 сынран ытла пулман.

Аслӑ Социалисӑмла революци Тавӑшкасси ҫинчен тӗттӗмлӗх, нушалӑх чатӑрне сирсе пӑрахрӗ. Унта малтанлӑха пачӑшкӑ ҫуртӗнчен шкул туса, хут вӗренме пуҫланӑ. Кӑҫал государствӑ вӗсене пысӑк шкул лартса панӑ. Ӗлӗк йалӗпе 4—5 сын ҫеҫ вулама, сырма пӗлнӗ пулсан, халӗ хут пӗлменнисем 4—5 сынран ытла мар. Вӑтӑр виҫӗ сын аслӑ тата вӑтам шкулсенчен вӗренсе тухнӑ.

Трахом чирне те пӗтерсе пыраҫҫӗ. Йалта трахпункт пур. Унта пурте сывалма ҫӳреҫҫӗ. Вулав ҫурчӗ пур. Унта кашни каҫах кӗнекесем, хаҫат-журналсем вулама пухӑнса лараҫҫӗ, докладсемпе лекцисем итлеҫҫӗ. Кашни килех мӗнле хаҫат та пулин килсе тӑрать.

Йалтах кооператив лавки пур. Вӑл колхозниксене тӗрлӗ таварсем кӳрсе парать. Ӗлӗк нихҫан хӗл касмалӑх тырӑ туса курман сынсем кӑҫал колхозра вӑтамран 200—300 пӑт тырӑ илеҫҫӗ.

Колхозлӑ йал пуйанланать, куԓтурланать.

М. Григорйев.

Тулли правасемпе усӑ куратпӑр

„Чӑхӑ—кайӑк мар, хӗрарӑм ҫын мар" тесе кулнӑ ӗлӗк хӗрарӑмран. Ӑна выԓӑх вырӑннех шутланӑ. Ҫӗр паман, пухусене ҫӳретмен, шкула вӗренме йаман. Унӑн пурнӑҫӗ тӗпӗл кукринчех иртнӗ.

Октӑбӗрти социалисӑмла революци хӗрарӑма арҫынпа пӗр тан правасем пачӗ. Иртнӗ 20 ҫул хушшинче совет ҫӗршывӗнчи темиҫе ҫӗршер хӗрарӑм инженера, ԓотчике, командира тухрӗҫ. Мӗн чухлӗ хӗрарӑм аслӑ шкулсемпе вӑтам, кӗҫӗн шкулсенче преподавателсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Йепле каласа пӗтерен.

Епӗр акӑ, 1937 ҫулта фабрик-завод шкулӗнчен вӗренсе тухса хаклӑ йышши станоксем ҫинче ӗҫлеме пуҫларӑмар. Малтанах, вӑл станоксене курсан ӗҫлеме йавӑр пек туйӑначчӗ. Мӗншӗн тесен, 1936 ҫулчен пирӗнтен нихӑшӗ те заводсенче, пысӑк хуласенче пулман. Епӗр пурте чӑваш йалӗсенчен вӗренме пывӑскерсем. Вӗренӳве лайӑх вӗҫлерӗмӗр, пурте станоксем ҫинче ӗҫлеме правасем илтӗмӗр. Халӗ ӗнте, епӗр пысӑк та хӑватлӑ станоксем ҫинче ӗҫлетпӗр.

Пире ҫак кӗске вӑхӑтрах ытти хуласене кайса ҫӳреме те услови туса пачӗҫ. Пирӗнтен хӑшӗсем кӑҫал Мускавпа Ленинград хулисене екскурҫине кайса курчӗҫ, хӑшӗсем канмали ҫуртсенче канчӗҫ.

Епӗр кунне 6 сехет ҫеҫ ӗҫлетпӗр. Пирӗн ҫул ҫитмен. Нормӑсене ытлашшипех тултарса ӗҫлетпӗр. Илйина циркуԓнӑй станок ҫинче ӗҫлесе кулленхи нормӑна йаланах 180 процент таран тултарать.

1937 ҫулта чи телейлӗ, савӑнӑҫлӑ кун пирӗншӗн—октӑбӗр уйӑхӗнче фабрик-завод шкулӗнчен вӗренсе тухса, комбината ӗҫлеме кӗуҫни пулса тӑрать.

Епӗр телейлӗ хӗрсем. Пирӗн чӗрере ӗҫлес кӑмӑл выԓӑнать. Ӗҫлеме йуратапӑр. Вӑхӑт ӗҫлеме те, канма та, вӗренме те ҫитет. Вӑхӑчӗпе ӗҫлетпӗр, вӑхӑчӗпе канатпӑр, вӑхӑчӗпе вӗренетпӗр. Спасибӑ ҫакӑн пек телейлӗ пурнӑҫ туса паракан йуратнӑ аттене Сталин йулташа.

С. Илйина, М. Григорйева, Йе. Степанова, А. Сергейева, Йе. Шакарова, У. Захарова, Ал. Константинова — Ҫӗмӗрлери фабрик-завод шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ, комбинатра ӗҫлекенсем.

Кӑҫал тата ытларах тырпул туса илессишӗн кӗрешмеле

1937 ҫулхине Шупашкар районӗнчи нумай колхозсем вӑйлӑ тырпулшӑн пыракан кӗрешӳре хӑйсен пултарулӑхӗсене лайӑх кӑтартрӗҫ. Чучукассинчи „Молотов" колхозӗ кашни гектар ҫинчен вӑтампа—18,46 центнер, Копкинори „Осоавиахим" колхозӗ—18,84 центнер, Карантайкассинчи „Дружба" колхозӗ—17,75 центнер, Завражнайри „Красная заря" колхозӗ—17,25 центнер тӗштырӑ туса илнӗ. Анаткассинчи „Труд" колхоз 14,44 гектар ҫинчен вӑтам шутпа кашни гектартан 22-шер центнер урпа, 16 гектар ҫинчен 20-шер центнер сӗлӗ туса илчӗ. Чӑрӑшкассинчи „Крахмал" колхозри Андрейев С. бригади 6 гектар ҫинчен 23-шер центнер ҫурхи тулӑ туса илчӗ.

Колхозсенче тырпул тухӑҫлӑхӗ ӳссе пыни колхозниксен ӗҫкунӗсен хакне 2—3 хут ытла ӳстерчӗ. Йакимоври „Иккӗмӗш пйатилеткӑ" тата Кочаковри „Кочаковец" колхозсенче кашни ӗҫкунӗ ҫине 10-шар килограм тӗштырӑ валеҫсе панӑ. Свечкинори „Красный дол", Куснарти „Кормилец", Анаткассинчи „Труд", Сарадакассинчи „Ҫӗнӗ йал" тата Тоскинкассинчи „Ударник" колхозсенче ӗҫкунӗ ҫине ҫуршар пӑт тӗштырӑ валеҫнӗ. Ҫапла вара, Шемшер йалсоветӗнчи „Хӗрлӗ ҫӑлтӑр" колхозра Никитин Михаил ҫемйи 627 пӑт тырӑ, 3.303 килограм ҫӗрулми, Сергйев Павел ҫемйи 400 пӑт тырӑ илнӗ.

Шупашкар районӗ 7—8 мӗлйард пӑт тырӑ илмели ҫинчен Сталин йулташ панӑ лозунга пурнӑҫа кӗртес ӗҫре тата лайӑхрах ӗҫлеме пултарнӑ. Анчах районри ҫӗрӗҫ пайӗпе райӗҫтӑвкомӑн йертсе пыракан вырӑнӗсенче ларнӑ халӑх тӑшманӗсем—Агеносовпа Йаковлев колхозсене вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешме тӗрлӗ майсемпе чӑрмантарса пынӑ.

Халӗ ҫав тӑшманла ӗҫсене тӑрӑ шыв ҫине туртса кӑларнӑ, ҫӗрӗҫпе райӗҫтӑвкомра ларнӑ сӑтӑрҫӑсене совет учрежденийӗсенчен тасатнӑ. Анчах районри партипе советӑн ҫӗнӗ руководствинче ларакан йулташсем халӑх тӑшманӗсен сӑтӑрлӑ ӗҫсен йулашкийӗсем тӳрлетес пирки колхозниксен массине ҫителӗклӗ таран мобилизациленме пултараймаҫ. Районра суракине хатӗрленес ӗҫ ҫителексӗр пулса пырать.

Парти Чӑваш Обкомӗпе Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ тӑрӑх, 1938 ҫулхи февраԓ уйӑхӗнче кашни районрах колхозниксен районри слетӗсем пулса иртеҫҫӗ. Ҫав слетра хатӗрленнӗ май, районри партипе совет тата ҫӗрӗҫ организацийӗсен колхозсене суракине лайӑх хатӗрлеме, политикӑла тата масӑла ӗҫе аплӑн сарса йама пулӑшас пулать.

А. Григорйев.

Совет влаҫӗ патша Российӗн пусмӑренче кайа йулнӑ колони пулнӑ Киргизийе Совет Сойузӗнчи пӗртан правалӑ республикӑ туса хучӗ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНӖ: ача ҫуратнӑ колхозница С. Бордыйева (Ошски районри „Моннок" колхоз, Киргиз ССР) Кашгар-Кишлакски йалсоветӑн ача ҫуратмали ҫуртӗнче.

(Сойузфото).

Вырӑссен аслӑ поет—демократ

(Н. А. Некрасов вилни 60 ҫул тултарнӑ тӗле)

1938 ҫулхи йанварӗн 8-мӗшӗнче вырӑссен аслӑ поечӗсенчен пӗри, хӑйӗн сӑввисенче халӑхӑн тулса ҫитнӗ ҫиллине тата тавӑру кӑмӑлне кӑтартакан—Николай Алексейевич Некрасов вилни 60 ҫул ҫитет.

Пире поет вилнӗ кунран уйӑрса тӑракан 60 ҫул, унӑн ҫутӑ сӑн-сӑпатне тӗксӗмлетмерӗ. Халӑх ӑна йуратни ҫулран-ҫул ӳссе, сарӑлса пычӗ, мӗншӗн тесен, вӑл хӑй чӗрийӗн пӗтӗм хӗрӳлӗхне, хӑйӗн пӗтӗм пысӑк талантне халӑха ирӗке кӑларас кӗрешӗве панӑ, вӑл килес ӑрусене ваԓԓи халӑх пурнӑҫӗн нихҫан манми картинисене ҫырса хӑварнӑ, вӑл вырӑс поезийӗн историнче малтанхи хут пуҫласа ӗҫсыннине—хресчене, хулари хӗнхур куракан чухӑна—хӑй поезийӗн тӗп геройӗ тунӑ.

Вырӑссен пӗррӗмӗш поет-демократӗ пурнӑҫпа литературӑн йавӑр та пысӑк ҫулӗ тӑрӑх утса тухнӑ. Вак дворйансем хушшинчен тухнӑскер, вӑл мӗн ачаранпах крепостной чуралӑхӑн хӑрушлӑхӗсене, хресченӗн нишлӗ пурнӑҫӗпе праваҫӑрлӑхне, помешчиксем тискеррӗн ирттӗхнине курса ӳснӗ. Некрасовӑн ашшӗ, Иарославԓ сывӑхӗнчи Грешнёво салине тытса тӑнӑ. Вӑл хайар та кӑнттам, хытӑ чунлӑ сын, хӑй кил йышӗн инкекӗ, крепостнойсен чунилийӗ, хӑйӗн сӑн сӑпачӗпе вӑл—влаҫ тытса тӑракан помешчиксен пӗтӗм ирсӗр йенӗсене пӗтӗҫтерсе тӑнӑ. Н. А. Некрасов хӗнхур айӗнче асап куракансен хурлӑхлӑ сассисене итлесе ӳснӗ, вӑл помешчиксем иртӗхнине, аслӑ та лӑпкӑ тата питех йаваш чунлӑ амӑшне ашшӗ тискеррӗн мӑшкӑланине кулленех курса тӑнӑ.

Вӑл ашшӗне курайман, унӑн йуратакан амӑшӗ ир виднӗ. Ҫаксем Некрасов чӗринче ӗмӗрлӗхех йулнӑ. Ҫавӑнпа та ашшӗне, Грешнёвори пурнӑҫа аса илсен поетӑн творчествинче крепосничествӑна курайманни йаланах ҫӗнӗ вӑйпа ҫӗкленсе хӑпарнӑ пулсан, амӑшне аса илнӗ чух унӑн кӑмӑлӗ хурлӑхпа пусӑрӑннӑ.

Пурнӑҫӑн чи йавӑр саманчӗсенче поет хӑй ӑсӗнче асапра ҫунса кайнӑ амӑшӗн сӑн-сӑпатне чӗртнӗ. Вӑл ӑна хӑйӗн йавӑр пурнӑҫне ӳпкеленине каласа панӑ, амӑш сӑн-сӑпатӗнчен вӑл малала кӗрешме вӑй илнӗ, вӑл унта хӑйӗн ӗмӗрлӗхе суйласа илнӗ ҫулӗ тӗрӗссине ҫирӗплетсе паракан шанӑҫ курнӑ:

„Уйӑври пек асса ирсӗр иртӗхнӗ
Йунлӑ алӑлисем патӗнчен
Ӗс мана йурату аслӑ ӗҫӗшӗн
Вилекенсем патне илсе кай".

Некрасовӑн ачалӑхӗ тата ҫамрӑклӑхӗ пиншер помешчик ачисеннипе пӗр йеверлӗрӗх. Килте начар вӗрентни. Гимназире вилӗ схоластикӑна чӑмлани...

Некрасов ашшӗ ывӑлне тем пулсан та ҫар ӗҫнех йама шутланӑ, анчах пулас поет чӑн-чӑн пӗлӳ илме, пур йенчен те ҫирӗп ҫитӗнсе пыма туртӑннӑ. Ашшӗ ӳкетленине пӑхмасӑрах, Некрасов, Петербурга ҫитсен, йункерсен училищине мар, ирӗклӗ итлекен пулса университета кӗрет. Ашшӗ пулӑшман пирки вӑл урок сем панипе, тӗрлӗ сыру ӗҫӗсем туса пынипе, корректурӑсем вуланипе тӑранкаласа интеллигентлӑ пролетари—разночинцӑн йавӑр пурнӑҫӗпе пурӑннӑ.

Унчухнехи Ф. А. Кони издателӗн „Литературная газета" издателствинче ӗҫлесе, Некрасов театр ваԓԓи водевиԓсем (пӗчӗк пйесӑсем), кулленхи кӑлтӑксене хытӑ ҫапакан куплетсем тата ытти ҫавӑн йышши йапаласем ҫырнӑ.

Выҫлӑ-туглӑ пурнӑҫӑн йавӑрлӑхӗсем ҫумне тата литературӑра ӗҫ ӑнса пыманни хутшӑнать: 1840 ҫулта Некрасов „Мечты и звуки" йатлӑ сӑвӑ кӗнеки кӑларнӑ. Критиксем ӑна сиввӗн йышӑннӑ. Белинский ку кӗнекене тӗрӗссипе хыттӑн тишкерсе хакланӑ.

Кайрантарах, пурнӑҫ ҫулӗ Н. А. Некрасова вырӑссен аслӑ критикӗпе—В. Г. Белинскийпе тӗлпултарса ҫывӑххӑн паллаштарнӑ хыҫҫӑн ҫеҫ вӑл пысӑк поет, революцилӗ демократин йурӑҫи пулса тӑрать.

Белинскин влийанийӗ ҫинчен Некрасов ҫапла ҫырнӑ:

„Руҫра мӗн пурӗ тӗлӗрсе,
Хӑрхӑмланса сӳланнӑ кунсенче,
Сан ӑс вӗрерӗ —ҫӗнӗ ҫул-йерсем,
Вӑл уҫса пычӗ, харсӑр ӗҫлесе.

Пире етем синчен шухӑшлама
вӗрентрӗн,
Малтан ес мар-и халӑха асилтӗн,
Ес мар-и чи малтан пуҫларӑн
каласма
Таванлӑх, танлӑх, ирӗклӗх ҫинчен".

Белинский, Некрасовӑн „Мечты и звуки" кӗнекери сӑвӑсене, халӑх пурнӑҫӗнчи картинӑсене ӳкерсе паракан малтанхи сӑввисене тишкерсе, поетӑн таланчӗ хӑш йеннеле каймалине пӗр йанӑшмасӑр, гениле сисӗмлӗхпе кӑтартса панӑ, ҫак паха таланта халӑхшӑн ӗҫлес аслӑ ӗмӗтпе ҫунатлантарнӑ.

Аслӑ критик вилнӗ хыҫҫӑнах, ҫулталӑк иртсессӗн, Некрасов „Современник" журнал кӑларса тӑрса, Белинский пуҫарнӑ ӗҫе малала илсе пыракан Чернышевскийпе тата Доброԓубовпа тӗл пулать. Ҫак аслӑ революционер—демократсен хӑватлӑ влийанийӗпе Некрасовӑн творчествинче революцилӗ-демократилӗ шухӑшсем тата ҫивӗччӗнрех палӑрса тӑракан пулаҫҫӗ, унӑн поезийӗ халӑх пурнӑҫӗпе, халӑхӑн инкек-синкекӗпе, шухӑш-кӑмӑлӗпе тата таччӑнрах сыхӑнать.

Некрасов, хӑйӗн шалти хирӗҫӗвӗсемпе иккеленӗвӗсен йавӑр ҫулӗ тӑрӑх утса тухса, поет—демократ—революционер пулса ҫитӗннӗ, тепӗр чух унӑн лири „тӗрӗс мар сасӑ кӑларнӑ" пулин те, тӗп ытура вӑл хӑйӗн аслӑ йулташӗсен идиалӗсемшӗн хӑй пурнӑҫӗн йулашки кунӗччӗнех тӳрӗ тӑнӑ. Поет пурӑннӑ чух ун сӑввисене Российӑн ҫамрӑк ӑрӑвӗ касса кайса вуланӑ, вӗсенче кӗрешӳ ваԓԓи вӑйкал илнӗ.

32 ҫул хушшинче, Некрасовӑн „В дороге" йатлӑ пысӑк художествӑлӑ пӗррӗмӗш сӑввинчен пуҫласа, вилеччӗн нумай мар малтан ҫырнӑ „О, Муза! я у двери гроба" текен сӑвви патне ҫитиччен, Некрасов вырӑс сынниcен сӑн-сӑпатне тата халӑх пурнӑҫӗн картинисене туллин кӑтартса паракан сӑвӑсем, йурӑсем, поемӑсем нумай ҫырса хӑварнӑ.

В. Г. Белинский хӑй вӑхӑтӗнче Пушкинӑн „Евгений Онегинне" „вырӑс пурнӑҫӗн енциклопедийӗ" тенӗ пулсан, ҫав тивӗҫлӗхпех епӗр Некрасовӑн „Кому на Руси жить хорошо" тата унӑн ытти поемисемпе сӑввисене те, иртнӗ ӗмӗрӗн 50—70-мӗш ҫулӗсенчи вырӑс пурнӑҫӗн енциклопедийӗ, тесе калама пултаратпӑр.

Некрасов произведенийӗсем пирӗн умма „хресченсене ирӗке кӑларичченхи" тата „кӑларнӑ хыҫҫӑнхи" пӑтранчӑк та хирӗҫӳлӗ саманари вырӑс сыннисен сатирӑла, ҫулӑмлӑ-геройикӑла тата тарӑн трагедиле образӗсен галлерейӗ пек тухса тӑраҫҫӗ.

Некрасов, Российӑри помещиксен-крепостниксен стройӗ, ҫитӗнсе пыракан капиталисӑм хӗстернипе, пур йенчен те ҫуралса, ишӗлсе пынӑ тапхӑрта, Российӑри „чумазый" капиталисӑм историн малти сцени ҫине тухса пынӑ тапхӑрта, халӑх чӑтӑмӗ тулса ҫитнӗ тапхӑрта ӗҫленӗ. Тӑвӑл умӗнхи пӑчӑ сывлӑша Некрасов ҫакпаха йеркесӗнче кӑтартса панӑ:

„Пӑча! Телейсӗр те ирӗксӗр
Каҫ вӗсемсӗр тӑсӑлать.
Тавӑл пӗрех килсе кӗтӗрччӗ!
Хуйхӑ кӗҫ-кӗҫ тӑкӑнать.

Кай кӗрлесе тинӗс ҫийӗн,
Хир-вӑрманта шӑхӑрттар,
Ҫӗр хуйхине аҫа ҫиҫӗмӗн
Тӗппех тӑкса йар!.."

Ҫак тӑвӑл умӗнхи атмосферӑра поетӑн ҫивчӗ куҫӗ „тӗнче уртмахҫисен" — помешчик-крепостниксен, патша администрацийӗнчи мӑка бюрократсен, ҫаратакансемпе взйаточниксен, „Шуйско—Иваново тискер хурӗсен", Российӑри предпринимателсен—фабрикантсен ирсӗр хӑрушла сӑн-сӑпачӗсене лайӑх уйӑрса илме пултарнӑ.

Ҫивчӗ иронипе, хайарлӑхпа тулнӑ сатирӑла сӑвӑсемпе Некрасов халӑха пусмӑрлакансене, йунӗҫекенсемпе харампырсене ҫунтарать; поет вырӑс поезине малтан пуҫласа сатирӑла-публицистикӑлла сӑвӑ жанрӗ кӗртет. „Современники" поемӑра, „О погоде", „Песни о свободном слове" йатлӑ сӑвӑсенче, „Балет" сатирӑра тата ытти нумай произведенисенче поет тӑван халӑхӗн тӑшманӗсене, ӑна пусмӑрлакансене ылханса питлет. Сатирӑ Некрасовӑн пӗтӗм творчествине витӗр витнӗ, „Кому на Руси жить хорошо" поемӑн „Помещик", „Последыш" йатлӑ пайӗсенче сатирӑ уйрӑмах ҫӳле нихӑҫан пулман хайарлӑхпа ҫӗкленет.

Некрасов хӑй вӑхӑтӗнчи обществӑн чи ирсӗр сыннисем ҫине те—„уйаври пек асса ирсӗр иртӗхекен" либералсем ҫине ҫавӑн пекех вӑйлӑ саркасӑмпа, курайманлӑхпа тӑрӑнать. Поет либералсен лакейла чунӗсене пӗр хӗрхенмесӗр ҫивӗччӗн касса уҫнӑ:

„Диалектик ӑшӑ кӑмӑллӑ,
Тӳр чӗре те ҫутӑ ӑс!
Еп куратӑп: ес пит шухӑшлӑ,
Либерал—идеалис.

Ес теорире ҫил-тӑвӑллӑ,
Хӗрхенӳсӗр радикал,
Урамра полици куртӑн тӑк—
Шӑвӑнатӑн айакка".

Поетӑн сасси халӑха пусмӑрлакансемпе вӗсен лакейӗсене хирӗҫ мӗн чухлӗ хайарлӑхпа, хӗрхенӳсӗрлӗхпе ҫӗкленет, ҫавӑн чухлӗ тӳлеккӗн, тарӑн йуратулӑн, малалӑх шаннӑн илтӗнет халӑх ҫинчен каласнӑ чух.

Поет хӑйӗн йуррине тӑван ха-

Манăн иртнĕ çулхи чаплă кунсем

Асран кайми çулталăк

П. ЦЫГАНОВА
ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕ—Куславкка комбинатĕнчи стахановка

Иртнĕ çулталăк чаплă çĕнтерӳсен савăнăçлă та пархатарлă кунĕсемпе тулчĕ. Совет Сойузĕнчи кашни ĕççынни иртнĕ 1937 çулта ӳсĕмсем çинчен калакан пиншер фактăсене, кăмăла савăнăçпа тултаракан çĕршер çутă кунсене аса илнипе ăсатса йарать. Кашни ĕççынни, вăл кирек ăçта ĕçлет пулсан та, çĕнĕ 1938 çула хăйĕн иртнĕ çул хушшинчи мĕнле те пулин ĕмĕрлĕхех асра йулакан чаплă ӳсĕмсемпе уйавлать. Пирĕн Аслă Совет Сойузĕн кашни кунĕ телейлĕ ĕççыннисен пурнăçне çĕнĕ паха пуйанлăхпа тултарать.

Маншăн иртнĕ çулталăкăн кунĕсем хăмăн ĕмĕрти пĕтĕм кунсенчен чи чаплă, ĕмĕр манми кунсем пулса йулчĕç. Ку кунсем маншăн çеç мар, пĕтĕм совет ĕççыннисен ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсене пурнăçа кĕртекен кунсем пулса тăраççĕ. Ĕççыннисем Аслă Совета депутата суйлама тăратнă кандидатсен—Ленинпа Сталин партине чĕререн йуратса ĕçлекен çынсен йачĕсене çырнă бӳлетенсемпе пĕрлех хăйсен ĕмĕтне, хăйсен шухăшĕсене, малашнехи телейлĕхне, Сталин йулташа чĕререн йуратнине шурă конвертсем ăшне чиксе суйлав урнисене пачĕç. Мĕн чухлĕ савăнăç, мĕн чухлĕ хĕрулĕ шухăшсем çуралчĕç ун чухне ĕçхалăхĕн ăстăнĕнче.

Анчах маншăн суйлав кунĕ тата та ытларах пăлăрса тăрать. Епĕ суйлав кампани пуçлансанах, мана Аслă Совета депутата суйлама кандидата тăратнă хыççăн, хамăн пурнăçри кашни утăма, хамăн ĕмĕрти кашни куна тишкерсе тухрăм. Манăн куç умне патша самани вăхăтĕнчи нушалăх, хĕрарăмсем чăтма çук хĕсĕкре пурăнни тухса тăчĕ. Анчах ку нумайлăха пымарĕ. Вĕсене халĕхи телейлĕ пурнăçăн савăнăçлăхĕ, ырă пурнăçăн пуйанлăхĕсем çĕнтерсе илчĕç. Кăмăл савăнăçпа тулчĕ. Епĕ рабочирен мастера çити ӳсce çитĕннине, стахановла йухăм пуçламĕшĕнче хамăн ăстанра çуралнă ĕмĕтсене, 1936 çулта партине кĕнине, пурнăç пуйанланса пынине куртăм. Çак вăхăтра манăн пуçăмра Сталина курас ĕмĕт çуралчĕ.

Аслă Совета депутата суйлама тăратнă кандидатсем суйлавçăсем умĕнче пулма тытăнсан, епĕ те Канашпа Вăрмар районĕсенчи суйлавçăсем патне тухса карăм. Ку вăхăтра мĕн-мĕн çинчен шутламарăм-ши? Каласа та пĕтерес çук. Чылай çĕрте ССРС Тĕпĕçтăвком секретарĕпе Горкин йулташпа пĕрле пултăмăр. Горкин йулташ чăваш халăхĕн пурнăçĕпе хытă интересленет.

— Культурăлă пурнаççĕ чăвашсем,—тесе тĕлĕнечĕ вăл.

Суйлав умĕнхи суйлавçăсен канашлувĕсенче колхозниксем йе рабочисем хăйсем маншăн сасăлама пулни çинчен каланă чухне манăн пĕтĕм кăмăл савăнăçпа хыпăнса ӳкетчĕ. Епĕ вĕсен кашни сăмахĕнчен ман çине пысăк ответлăх хунине кураттăм.

Декаберĕн 12-мĕшĕ—суйлав кунĕ çитрĕ. Ку кун манăн шăмшак пĕтĕмпех савăнăç хĕлхемĕпе вĕреме тытăнчĕ. Çĕнĕ ĕмĕтсем çуралчĕç. Вĕсене епĕ кашни çынăн сăн-сăпачĕ çинче кураттăм.

Мана ĕççыннисем шанса Аслă Совет депутатне суйларĕç. Ĕççыннисем ман çине пысăк шанчăк хуни, мана вĕçĕмсĕр тивĕç пани кăмăла савăнăçпа тултарнипе пĕрлех пысăкран та пысăк ответлăх хурать.

Сталин йулташ Мускав хулинчи Сталинский суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухувĕнче декаберĕн 11-мĕшĕнче депутатăн мĕнле пулмалли çинчен каласа пачĕ:

„Суйлавçăсем, халăх хăйсен депутачĕсенчен çакна ыйтмала: депутатсен хăйсен задачисен çӳллĕшĕнче тăччĕр, вĕсем хăйсен ĕçĕнче политикăла обывателсен картне анса ан ларччĕр, вĕсем Ленин сăнарлă политикăлă деятелсен выранĕнче тăччĕр, вĕсем Ленин пекех йар уçă та паллă деятелсем пулччĕр, вĕсем Ленин пекех кĕрешӳре нимрен хăраман тата халăх тăшманĕсене нимĕн хĕрхенмен çынсем пулччĕр, вĕсем ĕç йăвăрланма пуçласан, тавра курăмра мĕнле те пулин хăрушлăх палăрса тухма пуçласан, кирек мĕнле хăраса ӳкесрен те, кирек мĕнле хăраса ӳкес пеккинчен те ирĕклĕ пулччĕр, вĕсем кирек мĕнле хăраса ӳкес пеккинчен те Ленин пек ирĕклĕ пулччĕр, кăткăс ыйтусене татса панă çĕрте пур йенлĕ ориентаци тата пĕтĕм плюссемпе минуссене пур йенчен те учота илмеле çĕрте вĕсем, Ленин пекех, аслă та васкамасăр тавакансем пулччĕр, вĕсем хăйсен халăхне, ăна Ленин йуратнă пекех йураччĕр".

Çак сăмахсене пурнăçа кĕртессишĕн епĕ пĕтĕм вăйа, пултарулăха паратăп. Кирлĕ пулсан, хамăн пурнăça та пама хатĕр.

Акă часах йанварĕн 12-мĕшĕнче хамăн суйлав тапхăрĕнче çуралнă ĕмĕте пурнăça кĕртетĕп. ССР Сойузĕн Аслă Советăн ларăвне кайса епĕ аслă Сталина куратăп. Ку мана малашне тата та лайăх ĕçлеме çĕнĕ вăй-хал парĕ.

Икĕ орден

Гришă Сергейевăн çамрăклах нушала пурнăçпа паллашмала пулнă. Çичĕ çултах ашшĕпе пĕрле кĕтӳре çӳреме пуçланă.

Çулахи ăшă кунсенче вăрмана кĕрсе çакаран шăхличĕ ӳкерсе тухатчĕ те, мĕн ир пуçласа каçченех уйхирте хурлăхлă йурă йурлатчĕ. Каçхине йалти Кузьмин кулакăн лашине çитерме кайатчĕ. Кулак лашине кусхупмасăр сыхлатчĕ, çывăрмастчĕ. Ирхине каллех кĕтӳ хăвалаcа уйа тухатчĕ. Вăл кĕтĕве сырма хĕрпе каптарма ансан тин кăштах тĕлĕрсе илетчĕ.

Çакăн пек пушалă пурнăçпа тертленсе пурăннă пирки вуп виçĕ çула çитиччене вĕренме кайаймасăр пурăнчĕ. Кайарахпа тин вĕренме пуçларĕ. Лайăх вĕренетчĕ, лайăх вĕреннĕшĕн учителсем те йуратаччĕç ăна.

Гришă 1928 çулта комсомол ретне кĕчĕ. Унтан вара обществăлă ĕçсенче чылай ĕçлерĕ. Çамрăксем умĕнче унăн авторитечĕ ӳснĕ çемĕн ӳссе пычĕ. Ăна 1928 çултах комсомол йачейкин секретарне суйларĕç. Ун чухне вăл йалта колхоз организацилес тĕлĕшпе хастарлăн ĕçлерĕ.

1931 çулта, кĕркунне, Григорий Сергейева пирĕн мухтавлă çĕршывăн чиккисене сыхлама илчĕç. Вăл çакă пысăк тивĕçе йурахлă пулнăшăн питĕ савăнчĕ.

— Епĕ, кĕтӳç пулса, нушалă пурăннă. Совет влаçĕ пирĕн пек чухăнсене, тарçă пулнă çынсене, пуйан, телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса пачĕ. Епĕ халĕ ăна тăшмантан сыхласа тăма кайатăп. Есĕр йалта колхоза çирĕплетессишĕн тăрăшса ĕçлĕр,—терĕ вăл пире хăйне ăсатма пырсан.

Ку пулас красноармейцăн, çĕршыв патриочĕн сăмахĕ пулчĕ. Гришă йалта пирмерлă комсомолец пулнă пекех, çарта та хăйĕн активлăхне лайăх кăтартнă. Ăна, примерлă красноармейца, часах танкиссен шкулне вĕренме йараççĕ. Вăл унтан отлично вĕренсе тухнă. Халĕ ĕнтĕ вăл—лейтенант, танкиссен йуратнă командирĕ.

Çĕршыва сыхлас тĕлĕшпе хăйĕн патăрлăхне лайăх кăтартнăшăн ăна правителстви икĕ хутчен орден парса награлăланă. Халĕ унăн кăкăрĕ çинче Хĕрлĕ Çăлтăрпа Хĕрлĕ Йалав орденĕсем çиçсе тăраççĕ.

А. Иванов.

„Фотохудожник" Сталинла Конституци йачĕпе каларнă фото-серирен.

Пурне те тивĕç çар обйазаннăçĕ—саккун пулса тăрать.

(Сойузфото)

Калинина куртăм

1937 çулта маншăн икĕ кун нихçан асран кайми паллă кунсем пулса йулчĕç. Пĕри вăл—епĕ Хĕрлĕ çара кайни, мана „Çĕнĕ пурнăç" колхоз пысăк уйав туса ăсатни.

Тепĕр кунĕ вăл—епĕ Ленинград хулинче ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвком председателне—М. И. Калинин йулташа курни.

Калинин йулташ Совет Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕ умĕн пухăнна митингра сăмах каларĕ. Вăл çав тери савăнăçлă, ăшă кăмăллă çын. Ăнланмала чĕлхепе каласать. Епĕ сулпуççене халиччен курмансĕр, унăн сăмахне пĕр-сиктермесĕр итлесе тăтăм.

Вăл пирĕн çĕршывăн çĕнтерĕвĕсем çинчен ,фашиссем пире хирĕç вăрçă хатĕрлени, революцилĕ сыхăлха вăйлатма кирли çинчен витĕмлĕ сăмах каларĕ.

— Епĕ телейлĕ те савăнăçлă тата пуйан пурнăçăн аслă çĕршывне сыхлама йаланах хатĕр,—тесе кăшкăрассăм килчĕ манăн.

Красноармейец П. Скворцов.

Çĕмĕрле комбинатĕнчи столярнăй цехра ĕçлекен стахановец Иванов Петр.

Вăл хăйĕн кашни кунхи ĕç нормине 200 процент ытла тултарса пырать.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Епĕ хут пĕлекен çын

Епĕ производствăра 23 çул ĕçлетĕп. Килте пурнăç йапăх пирки 1914 çулта Курбатов хуçа фабрикне ĕçлеме кĕтĕм. Епĕ ун чухне шăпах 15 çулта пулнă. Мĕн тăвасси пур, çамрăк пулсан та, чун тухаччен ĕçлемеле пулнă. Малтанхи çулсенче фабрикра подношникре—йапаласем йатнă çĕрте ĕçлерĕм. Ĕçе ирхине 6 сехетре кайаттăм та каçхине 6 сехетре таварнаттăм. Çапла ĕçлесен те мана кунне 20 пус çеç параччĕç. Нумай укçа илемлĕх ӳсеймен-ха течче хуçа.

Виçĕ çул хушши çак хуçа патĕнче ĕçлерĕм. Анчах отпуск илсе канман. Пухусем туса калаçман ун чухне. Ирхине пыратăнга, каçхине киле кайатăн. Хватере пулман, йаланах киле, йала ӳренĕ. Чирлесен-тусан пулăшу илесси çинчен шарламали те çукчĕ.

1917 çулхи революци телейлĕ пурнăç пачĕ. Епĕр—ирĕке тухрăмăр. Текех ĕнтĕ ĕçхалăх йунне ĕçекенсем çук, вĕсене пĕтертĕмĕр.

Пайан акă епĕ хамран хам тĕлĕнсе, савăнса ĕçлетĕп. Йепле савăнас мар-ха? Совет влаçĕ пулнăранпа производствăра 20 çул ĕçлетĕп. Кашни кунах пурнăç лайăхланса пырать. Вĕренме те, канма та, ĕçлеме те ирĕк.

Манăн çемйере 4 çын. Производствăра хам анчах ĕçлетĕп пулин те, пурăнма ытлашшипех çитет. Час-часах арăмпа театра та кайатпăр, канмали çуртра та пултăм. Хутла пĕлменлĕхе пĕтертĕм. Халĕ вулатăп, çыратăп.

1937 çулта декаберĕн 12-мĕшĕнче Сталинла Конституци тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Советне суйларăмăр. Епĕр арăмпа иккĕн ирхине; шăп 6 сехетре суйлав участкине кайса, социалисăмла çĕршывăн чи лайăх çыннисене: Чкалова, Краснова, Новикова Аслă Совет депутатне суйларăмăр. Çак куна епĕр нихăçан та манас çук. 1937 çулти чи паллă телейлĕ кун маншăн декаберĕн 12-мĕшĕ пулса тăрать.

М. Петров—Çĕмĕрле комбинатĕнчи авса пукансем тăвакан цехра ĕçлекен.

Артекра пултăм

Хамăн 14 çулхи пурнăçра епĕ ниçтах та пулса курман. 1937 çулта маншăн нихçан манми паллă кун агустăн 11-мĕшĕ пулса тăрать. Ку кун епĕ хамăн йулташпа Тамарăпа пĕтĕм сойузри пионерсен лагерĕнче—Арктекра пултăм. Мĕн-мĕн курмарăм-ши унта? Комсомол баракĕнче, пионерсен çуртĕнче, музейĕнче пултăм. Тĕрлĕ тĕслĕ йăвăссене, вылях-чĕрлĕхсене, кайăкĕшĕксене куртăм. Инçет хĕвеланăçпа хĕвелтухăçĕнче пурăнакан пионерсемпе курса калаçрăм, вĕсемпе паллашрăм. Çак куна епĕ нихăçан та манас çук.

К. КАЛИНКИНА—Çĕмĕрлери вăтам шкулта, 7-мĕш класра вĕренекен.

Бригадирсем вĕренеççĕ

Вăрман Йопĕшри „Ирĕклĕх" колхоз (Шăхасан р-нĕ) 1938 çулхи çуракине хатĕрленме тытăнчĕ.

Колхоз йалхуçалăх машинисене йуваттарнă, лаша хатĕрĕсене, плугсене пĕтĕмпех хатĕрленĕ. Вăрлăхсене алăпа та, машинăпа та суртласа тасатнă.

Пайанхи куна уйа 644 тоннă тислĕк кăларнă, ку тислĕке йĕрсĕре купаласа çĕртеççĕ.

Сураки акмали çĕр лаптăкĕшĕнче лапкăшпех йур тытнă, çавăн пекех ырашпа кĕрхи тулă калчисем çине те йур тытнă.

1938 çулта вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе бригадăсем хушшинче ăмăрту договорĕ тунă. Договорти пунктсене тĕрĕслесе пыраççĕ. Акă тĕслĕхрен, уйри тырпула шăвармашкăн Тихонов Владимир, Илйин Иван, Василйев . Паков фекали пухассипе ăнăçлăн ĕçлеççĕ.

Колхозра агрокружок пур, кунта уйрăмăнах бригадирсем пĕр сиктемесĕр çӳреççĕ. Ку курса Кузнецов И. В. йертсе пырать.

Смирнов И. В.

Комсомола кĕтĕм

Çак çĕнĕ çулта епĕ 17 çула кайатăп. Хамăн çамрăк ĕмĕрĕн 9 çулне шкулта вĕренсе иртертĕм. Халĕ 9-мĕш класра вĕренетĕп.

1937-мĕш çул маншăн ĕмĕр манми паллă çул пулса тăрать. Епĕ 1937 çулта, сентаберĕн 27-мĕшĕнче, Ленинла Комсомол ретне кĕтĕм.

Вĕренӳре аван вĕренсе пыратăп, пионерсем хушшинче ĕçлетĕп. 1937—38-мĕш вĕренӳ çулĕнче лайăх вĕренсе пыма пулатăп.

В. Зудин—Çĕмĕрлери Куйбышев йулташ йачĕпе тăракан шкулта вĕренекен.

Колхоза кĕреççĕ

Хĕрлĕ-Чутай. „3-ий райс'езд Советов" йачĕпе тăракан колхоз йышĕ ӳссех пырать. Аслă Совета суйланă вăхăтра ăнлантару ĕçĕ аван пынипе, колхозра пуйан та культурлă пурнăç пулнине ăнланса илсе, йединоличниксем халĕ 4 хуçалăх колхоза кĕчĕç. Зайавленисем татах пур.

Законов.

Ишлей р. Шетмĕпуç йалсоветне кĕрекен Турханти „Çĕнĕ Хунав" колхозра, çĕнĕ çула кĕгсе илнĕ майпа 2 хуçалăх колхоза кĕчĕç.

Шетмĕпуç йалсоветне кĕрекен Турханти „Çĕнĕ хунав" колхоз членĕ Семенов семйи 1150 ĕçкунĕ тунă. 1150 ĕçкунĕпе вăл 575 пăт тĕштырă илет.

А. Смирнов

Çуракине хатĕрленеççĕ

Атнашри Киров йачĕпе тăракан колхозра (Шăхасан р-нĕ) тырпулсемпе тупăшсене валеçрĕç. Ĕçкунĕ пуçне 8-шар килограм ытла тырă тиврĕ. Кăçалхи çул çав тери вăйлă тырпул туса илнине курса колхозниксем килес çул тата ытларах туса илессишĕн вăйа хурса ĕçлеме тытăнчĕç. Ку тарана ситсе 92 гектар çине йур тытнă, 4510 лав торф, 3560 лав тислĕк, 300 лав фекали, 60 центнер кĕл тата 300 центнер чăх-чĕп тислĕкĕ пухнă. Кусемсĕр пуçне 8 тоннă фосфорит сăпнăхĕ хатĕрленĕ.

Ситес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешӳ çĕрте пуринчен ытла пĕрремĕш бригадă малта пырать. Çак бригадăна Степанова комсомолка йертсе пырать. Бригадăри уйрăм колхозниксем пĕр пĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Исайов.

„Песня Еремушке" произведенийĕнче Некрасов хресчен ачисем çине пăхса, вĕсене çакна сыхлама чĕнет:

„Чăрсăр çилĕ, курайманлăх
Тивтĕр мул хуçисене,
Аслă шанчăк та тăванлăх
Пултăр ĕççыннисене".

Некрасовăн ачасен йачĕпе, уйрăмах хресчен ачисен йачĕпе çырнă сăввисем çутă, тулли те таса йуратулă пулнине халăхăн тĕлĕнмеле илемлĕ малашлăхне таранăн шаннипе çеç ăнлантарса пама пулать.

Тĕлĕнмеле паха сăн-сăпатлăн тухса тăрать пирĕн умма „Кому на Руси жить хорошо" поемăри Йаким Нагой хресчен образĕ. Мĕнле мăнкăмăллăхпа ответлет Йаким хуларан килнĕ çынна:

„Хĕрхенĕсĕн—пĕлсе хĕрхен,
Господасен виçипеле
Ес хресчене ан виç!
Ачаш шур алсем мар, епĕр,
Хăватла епĕр улăп пек
Ĕçре те уйавра"

Ĕçпе улăп пек алсă, хайарлăхпа çĕр кисретекен хресчĕнĕн символĕ пулса „таса вырăс паттăрĕ Савелий" образĕ тухать. Савелий, хăй тивлетне çӳлте тытса, хăйĕн тӳрĕ хĕрне çапла калать:

„Матрйонушка, шутлан пуль ес.
Мужик—вăл паттăр мар?..
Кунçулĕ те тивлетсĕр ун,
Вилĕмĕ те хисепсĕр ун,
Çапах хăй паттăрах!

Авăнкалать те хуçăлмасть,
Çĕмĕрĕлмест те ишĕлмест.
Йе, вăл и паттăр мар?"

Вырăс хĕрарăмĕсен образĕсене те Некрасов реалисăмăн çав вăйĕпех сăнласа парать. „Декабристки" йатлă произведенире пирен умма хăйсене хĕренмесĕр паттăрла ĕç тума пултаракан вăйлă, паттăрла хĕрарăмсен образĕсем тухса тăраççĕ. Некрасовăн хресчен пурнăçĕ çинчен çырнă сăввисемпе поемисенче виçĕ хутлă чуралăх пусмăрне чăтса пыракан вырăс хĕрарăмĕн, образĕ пĕтĕм çӳлĕ пĕвĕпе тухса тăрат:

„Етем ăраскалĕн пулнă виçĕ тӳпе,
Пĕрремĕш—чурапа венчеге
тăмала,
Иккĕмĕш—чура ывăлĕн амăшĕ
пулмала,
Виççĕмĕш çĕре кĕриччен чурана
пăхăнса тăмала.

Çак хайар тӳпесем пĕтĕмпех
Тийеннĕ вырăс çĕрĕн хĕрарăмĕ
çине".

Анчах вырăс хĕрарăмĕ çак виçĕ хутлă пусмăрлăх айĕнче тĕшĕрĕлсе ӳкмен. Акă тухса тăрат Орипăн—салтак амăшĕн, инкек-синкекре хавшакланман пысăк чĕрелĕ хресчен амăшĕн нихăçан манми сăнсăпачĕ. Акă Дарйан илемлĕ сăнĕ... Вĕсем çинчен поет каланă:

„Тулли кăмăллă, лăпкă сăн питлĕ
Пур вырăс йалĕсенче хĕрарăмсем.
Вĕсен хумханийĕ вăйлă, илемлĕ,
Утнийĕ, пăхнийĕ—чăн-чăн
патшасен.

Вĕсене суккăр çеç асăрхаймĕ,
Куçли вĕсене мухтавлать:
„Иртет сирĕн умран—хĕвел
çутатать вĕт!
„Пăхать сирĕн çине—млттăн
сапать!"

Вăхăтсăрлăх тапхăрĕнче, вырă историйĕ перелом тунă тапхăрта, Некрасов, художник—реалисăн çивчĕ куçĕпе тата революцилĕ демократăн сисĕмлĕ чĕрипе халăхăн аслă вăйне курса тата туйса илчĕ, çак майпа вăл халăхăн çутă пуласлăхне те кăтартса пачĕ. Çакарта ĕнтĕ Некрасовăн тăван халăх умĕнчи тивлечĕ.

„Русь" йатла йурăри сăмахсем çав пуласлăха пахаласа çырнă гимăн пек йанăраççĕ:

Вăранчĕç—вăратмасăр,
Тухрĕçĕ—чĕнмесĕр:
Тырпул пĕрер пĕрчĕн
Пуханчĕ—сăрг пулчĕ!
Çар çĕкленет ав—
Шутсăр хисепсĕр!
Никам çĕнейми вăл
Паттăр, хăватлă!"

Кам пирĕнрен таранрах та туллинрех ăнланĕ çак паха сăмахсене. епĕр, социалисăмăн çутă ĕçне тавакансем, епĕр, чухăн та нишлĕ Росси йаран Советлă Социалисăмла Республикăсен телейлĕ Сойузне туса çитĕнтернĕскерсем ăнланмасан! Таса вырăс паттăрĕ Савелисен, Нагой Йакимсен йăхĕсем, Росçийа шурлăхĕсенче хăйсен пуçĕсене хунă белорусс грабарĕсен йăхĕсем, епĕр, аслă халăх поечĕ вилни утмăл çул çитнĕ кун, вырăссен аслă поетне çапла калама пултаратпăр:— Сан ĕмĕт пурнăça кĕчĕ! Пирĕн çĕр Ленин—Сталин аслă йалавĕ айĕнче хăватлă та пуйан пулса тăчĕ. Есĕ вилĕм чиккинче малашнехине курса:

„Теттĕм çутăна вырăн парĕ, есĕ хăвăн йурруна Атăл çинче, Ока çинче, Шуратăл çинче илĕн.." тесе çырнă чух тĕрĕс шухăшланă.

Ал. Сурков.

„Ĕнерхи кун, пĕр улттăра,
Еп тухрăм Сеннойа;
Унта хĕртетчĕç пушăпа
Çамрăк хĕрарăма.

Ун кăкринчен пĕр сас та çук,
Шăхрать пушă хайарран.
„Пăхсам, ку сан тăван йăпу"—
тесе еп Музăна каларăм".

Поет—реалист Некрасов хресченсемпе хуларă чухăнсен хăрушла пурнăçне курса тăнă, вăл халăх пултарулăхне пусарса тăракан нишлĕхпе теттĕмлĕхĕн, мăшкăлпа чуралăхăн пĕтĕм йăвăрлăхне курнă. Анчах поет хăй тăван çĕршывĕн çутă малашлăхне, халăх ывăлĕсен пурнăç тăвас аслă хавачĕсене таранăн шаннă, ĕненнĕ.

Вырăс халăхĕн паха йенĕсемпе талантне пĕтĕçтерсе тăнă хăйĕн аслă тусĕсем çинчен—Белинскийпе Чернышевский тата Доброљубов çинчен—Некрасов пысăк поезилĕ вăйпа çуламланса тăракан сăвăсем çырнă. Вăл сăвăсенче поет тăван халăх мухтавне çӳле çĕклет, вăхăтсăр пĕтнĕ халăх ывăлĕсемшĕн хурланать.

Некрасов вырăс çамрăкĕсене чаплă халăх ывăлĕсем хыççăн кайма чĕннĕ. Вăл çамрăксен вăйхалне ененнĕ, вăл халăх хăвачĕпе халăх ăстăне çĕнтерессине пĕлнĕ:

„Не бездарна та природа,
Не погиб еще тот край,
Что выводит из народа
Столько славных то-и-знай..."

ах пурнăçĕпе сывăххăн сыхăнтарса йыма тăрăшнă. Халăхăн йывăр пурнăçне курса тăрса, вăл хăйĕн музине пасар плошчĕдĕнче чăпăркка айĕнче асапланакан крестйанкăпа танаштарать:

Капиталисăмла тĕнче

Тĕксĕм итогсем

Фашисла Германи 1937 ҫулта

1937 ҫул фашисла Германишĕн шалти тата тĕнчери йăвăрлăхсем пĕрмай йах ӳссе пынă ҫул пулнă. Ҫак йăвăрлăх Германире ҫине тăрса вăрҫа хатĕрленес ĕҫе вăйлатас, Испанире агрессине сарас, Чехо-словакине, Австрийе, Данцига, Венгрине, Литвана, т. ыт. те хирĕҫ ҫĕнĕрен авантӳрăлă ĕҫсем тăвас паллăпа, ĕҫсынни массисем ҫукка йулса пынă, выҫлăха кĕрсе ӳкнĕ, фашисăма хирĕҫле клас кĕрешĕвĕ сивĕчленсе пынă паллăпа ӳссе пынă.

* * *

Правителствă органĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Германири рабочисен ĕҫукĕн 1936 ҫулта 1933 ҫултипе танлаштарсан 18 процент чакнă, чăннипе илсен рабочисен ĕҫукĕн 28—42 процент чакнă. Ҫав вăхăтрах продуктăсен хакĕ 1933 ҫултипе танлаштарсан нумай ӳснĕ. Ҫăвăн пек, ҫăнăх хакĕ 50 процент, ҫĕрулми — 30 процент, ашҫакай—125 процент, маргарин—116 процент, сысна ашĕ—108 процент, ҫăмарта—118 процент ӳснĕ.

* * *

1937 ҫулта Германи 1936 ҫултипе танлаштарсан тырпул 10 процент кайарах пухтарса илнĕ. Акмали ҫĕр лаптăкĕ 493 пин гектар йе 2—3 процент чакнă. Ҫу тумалли културăсем акакан ҫĕр лаптăкĕ 8,2 процент чакнă.

* * *

1936—1937 ҫулти буджет ҫулĕнче Германире налог 11 мĕлйард та 477 мĕлйун маркă, 1935—1936 ҫулсенче 9 мĕлйард та 654 мĕлйун маркă пулнă. Ĕҫсыннисем ҫине хуракан налог 73 процент ӳснĕ. Ҫак налогсемсĕр пуҫне вырăнти налог 6 мĕлйард маркăлăх; рабочисемпе служăщчисенчен ирĕксĕрлесе тытса йулакан налог 2 мĕлйард маркăлăх пулнă. Ҫапла вара, Германире налог пĕтĕмпе 20 мĕлйард маркăна йахăн, пĕтĕм халăх тупăшĕнче 25 процент пулат.

* * *

Германире 15 пин ҫын ытларах пурăнакан хуласенче кашни пин ҫын пуҫне 1936 ҫулта 12.2 ҫын вилнĕ пулсан, 1937 ҫулăн малтанхи ҫурмаҫулĕнче 17.7 ҫын вилнĕ. Правителствă сахаллатса кăтартнă тăрăх та 1937 ҫулти пĕррĕмĕш кварталра кăна 2213 ҫын ҫакăнса, персе вилнĕ.

Йапони 1937 ҫул пĕтсе 1938 ҫул ҫитнĕ тĕле

Йапони империализмĕ Китай халăхне хирĕҫ вăрҫин Йапонин хуларине йалти ĕҫсыннисен пурнăҫне йăвăрлататăт, чухăнлатат. Ҫар хатĕрĕсем тăвакан промышленнăҫра рабочисен ĕҫкуне саккун тăрăх ĕҫлеттермели вăхăта парахăса кăларнă. 1936 ҫулти октабĕрпе танлаштарсан, 1937 ҫулти нойабĕрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ваккăн сутакан таварсемпе продуктăсен хакĕ 22.2 процент ӳснĕ.

* * *

Рабочисен пурнăҫне начарлатнине хирĕҫ рабочисем стачкăсене вăйлатнипе ответлерĕҫ. „Асахи" хаҫат: 1937 ҫулта рабочисемпе хресченсен йухăмĕ нихăш ҫулхисенчен вăйлă, тесе ҫырат. Май уйăхĕнче 300 забастовкă пулнă, 1937 ҫулта 1956 забастовкă ытла пулнă. Ҫав забастовкăсемпе стачкăсенче 206 пин рабочи хутшăннă.

* * *

Йапони хресченĕсем пит те йăвăр пурнăҫ патне ҫитсе тăнă. Рис пиҫĕ пачар пулни, чăтма ҫук йăвăр налогсем, ҫĕр тара илнĕшĕн укҫа нумай тӳлеттерни — Йапони хресченĕсене чухăнлатса ҫитерчĕ. Йапонин пĕр журналĕ 1937 ҫулти ҫуркуннех „Йапони йалĕ талкишпех выҫă пурăнат" тесе ҫырнă. Ҫĕрулпучĕсем ҫĕр тара илнĕшĕн тӳлеме пултарайман хресченĕсене пурне те ҫĕр участкисем ҫинчен хăваласа йараҫҫĕ.

Фашисла Поҫшă 1937 ҫулта

Поҫшăра рабочи вăтам шутпа эрнере 26,15 злотых ĕҫукĕн илет. Кӳ вăл Поҫшари рабочине тăранса пурăнма кирлĕ шутран 4 злотых сахал. Ҫак укҫапа Поҫша рабочи тумтир тата ытти йапаласем нимĕн те илме пултараймаст.

* * *

Поҫшăра 9 мĕлйун хресчен „ытлашши ҫын" шутланаҫҫĕ, мĕншĕн тесен вĕсем йалхуҫалăхĕнче те, промышленнăҫра та ĕҫ тупаймаҫҫĕ.

* * *

Поҫшăра 34 мĕлйун халăх пурăнат. Вĕсенчен пĕр мĕлйун сын туберкулҫоз чирĕпе, 500 пин сын трахомпа чирленĕ. Темиҫе мĕлйун рабочисемпе хресченсем нимĕнле медицина пулушĕвĕ те илме пултараймаҫҫĕ.

* * *

Поҫшăра халăх хисепĕ пĕрмайăн чакса пырат. 1935 ҫулăн малтанхи ҫурма ҫулĕнче 12.9 сын хутшăннă пулсан, 1937 ҫулăн малтанхи ҫурма ҫулĕнче кашни пин сын пуҫне 10.5 сын хутшăннă. Вилекенсем шучĕ ӳсет. 1936 ҫулта 36.678 сын вилнĕ, 1937 ҫулăн малтанхи ҫурма ҫулĕнче 54.549 сын вилнĕ.

Поҫша и халăхран 23 проценчĕ хутла пĕлмест. „Курйер поҫска" хаҫат пĕлтернĕ тăрăх, пуҫламĕш шкулсем валҫҫи 90 пин ҫурт тата 50.000 учител ҫитмест. 1929—1930 ҫул иртнĕ хыҫҫăн Поҫшăра шкулсем валҫҫи ҫĕнĕ ҫуртсем тума чарăннă. Поҫша ҫутĕҫ министрĕ Свентославски каланă тăрăх, Поҫшăра шкула ҫӳреме ҫул ҫитнĕ 5 мĕлйун ачаран пĕр мĕлйунĕ шкула ҫӳреме пултараймаст.

* * *

1937 ҫулти 3-мĕш кварталра Поҫша тĕрмисенче 70,000 сын ларҫнă, урăхла каласан, 1936 ҫулти 3-мĕш кварталĕнчен 10 процент ытларах. Тĕрмесе сынсене нумай хупнипе Поҫша тĕнчере пĕррĕмĕш вырăнта тăрат, кашни 100 пин сын пуҫне 206 сын тĕрмере ларат.

* * *

Поҫша — вак халăхсене шутсăр хытă пусмăрлакан сĕршыв. Поҫшăра Литва халăхĕ 100 пин сын пурăнат, ҫав 100 пин сын валҫҫи пĕр вăтам шкул ҫес. [illegible] белоруссем валҫҫи пĕр вăтам шкул. [illegible] белоруссен пуҫламĕш шкулĕсене пĕртте хăварминччен сĕмĕрсе пĕтернĕ.

Англи 1937 ҫулта

„Дейли уоркер" хаҫат ҫырса пĕлтернĕ тăрăх, ситĕннĕ рабочисем хушшинче ĕҫсĕр йулнисен [illegible] ӳсет. [illegible] сименни пулат. Ҫурсĕр Англире тата ытларах ачасен пурнăҫĕ тата ытларах начар.

Тĕрлĕ таварсем турттаракан 12.500 ача ĕҫĕсене тĕрĕслени чухне сакă курăннă: 4.170 ача эрнере 34 сехет, 1295 ача 60 сехет таран, 205 ача 66 сехет таран, 63 ача 66 сехетрен ытла ĕҫлет.

Ĕҫсыннисене эксплоатацилесси вăйланнипе пуян капиталисен усламĕ шутсăр нумай ӳснĕ. Декабĕр уйăхĕнче „Таймс" хаҫат ҫырса кăларнă документ сакна кăтартса парат: 120 концернăн усламĕсем 1932—33 ҫулсенче 2.794,000 фунт стерлинг пулнă пулсан, 1935—1936 ҫулсенче 43.723.000 фунт стерлинг, 1936—1937 ҫулсенче 50.044.000 фунт стерлинг таран ӳснĕ.

Англире шкул ҫулне ҫитнĕ ачасен пуна пайĕн, уйăхла каласан 500 пин ачан сывлăхĕ вĕсерен начар, ĕҫ питĕ начар тес йышăннă. Ачасен сывлăхĕ начар сăлтавĕ — ситеҫлĕ таран апат [illegible].

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсем 1937 ҫулта

Августăн ҫурма уйăхĕнчен пуҫласа, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен производстви пĕрмайăн чакса пырат. Хурҫă шăратакан промышленнăҫ хăйĕн производствăлă пултарулăхĕпе 19 процент ҫес усă курат. 1936 ҫулти нойабĕр уйăхĕпе танлаштарсан кăҫал нойабĕр уйăхĕнче 23 процент чакнă. Иртнĕ ҫулти нойабĕр уйăхĕнче чукунҫул транспорчĕ 132 пин вагон тийенĕ пулсан, кăҫалхи нойабĕрте 108 пин вагон ҫес тийет.

Производства чакнă май ĕҫсĕр тăрса йулнисен хисепĕ ӳсет. Сентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуҫласа ĕҫсĕр йулнисен хисепĕ 2 мĕлйун сын ӳснĕ. Пурнисен ытла йывăр промышленнăҫ предприйатийĕсем ĕҫсыннисене ĕҫрен кăларнă. Йанвар уйăхне ситичче тата 2 мĕлйун сынна ĕҫрен кăларса йарасса кĕтеҫҫĕ.

* * *

1933 ҫулти март уйăхĕнчен пуҫласа 1937 ҫулти май уйăхне ситичченех апатсимĕҫ продукчĕсен хакĕ 45 процент ӳснĕ. Хватер укçи 42 процент ӳснĕ.

* * *

1937 ҫулта Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче забастовка йухăмĕ тĕнчери вăрҫă ҫулĕсем хыҫҫăн пулнисенчен чи вăйлă пулнă. Ĕҫ министерстви пĕлтернĕ тăрăх, 1937 ҫулăн малтанхи ҫурма ҫулĕнче кăна 2.512 забастовка пулнă, вĕсене 198 пин рабочи хутшăннă. 1936 ҫулта ҫултăлăк хушшинче те 1070 забастовка ҫес пулнă, вĕсене 789 пин рабочи хутшăннă. Чи вăйлă забастовкăсем хурҫă шăратакан тата автомобил промышленнăҫĕсенче пулнă.

* * *

Хроникă

** ССР Союзĕн Ĕҫтăвакан Тĕп Комитечĕ М. И. Рыжков йулташа ССР Союзĕн Шалти ĕҫсен Халăх Комиссарĕн заместителĕнчен хăтарса ССР Союзĕн Вăрман промышленнăҫ Халăх Комиссарне сирĕплетнĕ.

** ССР Союзĕн Ĕҫтăвакан Тĕп Комитечĕ М. Н. Родин йулташа ССР Союзĕн Вăрман промышленнăҫ Халăх Комиссарĕн пĕррĕмĕш заместителне сирĕплетнĕ.

** ССР Союзĕн Ĕҫтăвакан Тĕп Комитечĕ Б. Н. Гантман тата Л. И. Коган йулташсене ССР Союзĕн Вăрман промышленнăҫ Халăх Комиссарĕн заместителĕсенчен хăтарнă.

(ТАСС).

Мускаври Каҫайевски урамра Тĕне хирĕҫле Тĕп музей уҫăлнă.
ӲКЕРЧĔК ҪИНЧЕ: музейри „Сталинла Конституци тата тĕне хирĕҫле пропагандă" йатлă темăпа йĕркеленĕ зал.

(Союзфото).

Салам Сталина

Пур ҫĕрте те хумлăн ҫĕкленет хаваслăх,
Ҫĕршывра илемлĕх пĕтес ҫук нихҫан.
Пуранатпăр лайăх, пурнăҫ ҫулĕ аслă,
Уншăн тавтăватпăр Аслă ҫулпуҫа.

Вăл пире телейлĕ, ырă пурнăҫ пачĕ,
Вăл пире хăтарчĕ йăвăр асапран.
Ҫĕкленет йалав пек ун мухтавлă йачĕ,
Ун ăслă сăмахĕ йаланах асра.

Ҫĕршыв ҫинĕн хурçă кайăксем вĕҫеҫҫи—
Вĕсене ҫĕкленĕ Сталин вăй парса.
Уйхирте хаҫ хурçа утсем кĕҫенеҫҫи,—
Вĕсене те Сталин панă колхоза.

Ачасем хаваслăн йаслĕре выҫҫаҫҫи,—
Ес куран унта та Сталин тивĕҫне
Ҫавăнпа саватпăр, чунтан йурататпăр
Пĕтĕм халăхсен аслă ҫулпуҫне.

Савнăҫшăн, телейшĕн—салам, аслă Сталин,
Пирĕншĕн ес, Сталин—ҫут майак, йалав.
Ҫавăнпа хаваслăн пĕтĕм халăх халĕ
Шăратат ҫĕн йурă санăн йатпала.

В. Ваҫкин.

ЧĂВАШСЕН
ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔ

ЙАНВАРĔН 2-мĕшĕнче
Чăвашла спектакҫ А. Н. Островский
„БЕДНОСТЬ НЕ ПОРОК"
(3 пайлă комеди). Аслă режиҫҫор К.И.Иванов лартат
Талон № 70. Абонемент № 2. Талон № 9.

ЧĂВАШСЕН
ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔ

ЙАНВАРĔН 3-мĕшĕнче
Вырăсла спектакҫ ШИЛЛЕР
„КОВАРСТВО и ЛЮБОВЬ"
(4 пайлă мешчанла трагеди)
Аслă режиҫҫор Г. В. Стэрнский лартат
Талон № 71. Абонемент № 3. Талон № 8.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ ҫумĕнчи хаҫат ĕҫне вĕрентекен центрти курса вĕренме илмели условисем

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ йышăннă тăрăх, ПСК(б)П Тĕпкомĕ ҫумĕнче хаҫат ĕҫне вĕрентекен центрти курс организацилет.

Курсра вĕренмели срук—пĕр ҫул.

Курсра вĕренекенсен йышĕ—125 ҫын.

Курса районри хаҫатсен лайăх редакторĕсене, хуласенчи, облаҫсенчи тата центрти хаҫатсенче ĕҫлесе палăрнă работниксене, аслă шкулран вĕренсе тухнисене илеҫҫĕ.

Курса вĕренме кĕрекенсем 35 ҫултан аслă мар пулмала, партире 5 ҫултан кайа мар тăни, пĕтĕм пĕлӳ тĕлĕшпе аслă шкулра вĕренме чухлĕ пулмала, вырăс чĕлхине лайăх пĕлмелле.

Тĕрĕслӳ испытанисем ҫак предметсем тăрăх пулаҫҫĕ:

Парти историйĕ, ССР Союзĕнчи халăхсен историйĕ, географи, вырăс чĕлхи, литературă.

Курса вĕренме кандидатсене ПСК(б)П Тĕпкомĕн пичетпе издателствă пайĕ партин вырăнти комитечĕсем, центрти, облаҫри, хулари хаҫатсен редакцисем тăратнă тăрăх тата уйрăм зайавленисем тăрăх суйласа илет.

Кандидатсем тăратас тата зайавленисем парас йулашки срук—1938 ҫулти февралĕн 1-мĕшĕ.

Курса вĕренме кĕрес текен йулташсен, 1938 ҫулти февралĕн 1-мĕшĕнчен кайа йулмасăр, ПСК(б)П Тĕпкомĕн пичетпе издателствă пайне ҫак документсене тăратмала: 1) зайавлени, адресне кăтартса; 2) тĕплĕн ҫырнă, парти комитечĕ ҫирĕплетнĕ автобиографи; 3) парти комитечĕ панă характеристикăпа рекомендаци; 4) ҫар обйазанăҫ йенĕпе мĕнле тăни ҫинчен справкă; 5) сывлăх ҫинчен справкă; 6) икĕ фотокарточкă.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн пичетпе издателствă пайĕ тĕрĕслӳ испытанине кĕртнĕ пур йулташсем те, хăйсем ĕҫленĕ ҫĕрте ĕҫукçи илсех пĕр уйăхлăх отпуск илеҫҫĕ, кунта черетлĕ отпуск шучĕ кĕмест.

Курсра вĕренекенсене общежити тата 750 тенкĕ стипенди параҫҫĕ.

Курсра вĕренекенсен ҫемйисене общежити памаҫҫĕ.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн пичетпе издателствă пайĕн пуҫлăхĕ

Л. Мехлис.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

ХИСЕПЛĔ ЙУЛТАШСЕМ!

„...Ҫĕр кăмрăкĕ чавмали мăлатук та, перекет кĕнеки те—савăнăҫлă телейлĕ пурнăҫшăн аслă кĕрешӳре чи кирлĕ оруди пулса тăрат".

Алексей Стаханов—ҫĕр кăмрăкĕ чавакан маҫтăр-орденоносец.

ЕСĔР

перекет кассисен пулăшăвĕсемпе усă куратăр-и, вĕсен вкладчикĕсем пулса тăратăр-и?

Перекет кассисем пур гражданисенчен те вкладсем йышăнаҫҫĕ тата вкладчиксем пĕрре ыйтнипех пĕтĕмпех йе вкладăн пайĕсен суммисене параҫҫĕ.

Вкладчиксен мĕн чухлĕ укҫа выртнине, вкладчик камне тата ыт. перекет кассисем никама та пĕлтермеҫҫĕ.

Вкладчиксем хăйсен укҫисене хăйсен ватăлăхĕнче тата урăх чух та хăйсен ашшĕ-амăшĕ, ывăл-хĕрĕсене, тăванĕсене памала туса хума пултараҫҫĕ.

Перекет кассине укҫа хывса унта усранăшăн вкладчиксене процент тӳлеҫҫĕ.

Кирлĕ пулсан вкладчиксем пĕрре ыйтнипех хăйсен укҫисене урăх перекет кассисене куҫараҫҫĕ.

Аккредитивсем йышăнаҫҫĕ тата вĕсем тăрăх укҫа тӳлеҫҫĕ.

Государствă займĕн облигацийĕсем тăрăх тухнă выҫавсене тӳлеҫҫĕ, купонсемшĕн укҫа тӳлеҫҫĕ.

Граждансем пурте государствă займĕсен облигацийĕсене залога хывса ссудă илме пултараҫҫĕ.

Пурте перекет кассисен услугисемпе усă курăр.

Перекет кассисем пур район центрĕсенче те, пур почтă уйрăмĕсенче те ĕҫлеҫҫĕ.

Шупашкар хулинче 3 перекет касси ĕҫлет:

60/1 №-лĕ перекет касси почтă ҫумĕнче, канмали кунсемсĕр пуҫне кашни кунах ирхине 10 сехетрен пуҫласа 15 сехет те 30 минутчен ĕҫлет.

Унăн адрĕсĕ: Шупашкар хули, Ленин урамĕ, Ҫыхăну ҫурчĕ, 1,2,3-мĕш №-лĕ чӳречесем. Телефон № 5—98.

60/3 №-лĕ перекет касси канмали кунсемсĕр пуҫне кашни кун ирхине 9,5 сехетрен пуҫласа 15 сехетчен ĕҫлет.

Унăн адрĕсĕ: Шупашкар хули, Ленин урамĕ, 7-мĕш №-лĕ ҫурт.

60-мĕш №-лĕ Тĕп перекет касси кашни кунах канмали кунсенче те, ирхине 9 сехетрен пуҫласа 19 сехет те 30 минутчен ĕҫлет.

Тĕп перекет кассин адрĕсĕ: Шупашкар хули, Хĕрлĕ плошчĕд, Чăваш республикĕнчи Финанс Халăх Комиссариачĕн ҫурчĕ.

Чăваш республикĕнчи Государствă Перекет кассин тата Государствă Кивҫенлĕхĕн Управленийĕ.

1938 ҫулшăн

„Чăваш Коммунĕ" Издателстви кăларакан Йумăрпа сатирă журналне „КАПКĂН" ҫырăнтарасси халĕ те пырат

Журнал чăвашла, уйăхра пĕрре тухса тăрат.

Пĕр номĕрĕ 40 пус
Ултă уйăха 2 т. 40 пус.
Ҫулталăка 4 т. 80 пус.

ПОЧТАҪЙОН!

Подпискăна ҫурҫуллăха, ҫулталăклăха пухма тăрăш

Журнал сарас тата ăна вăхăтра ҫитерес пахалăхшăн ĕҫле.

„Капкăн" редакцийĕ.

3—1

Декабĕрĕн 26-мĕшĕнче 1937 ҫ. Шупашкарти Октабĕр урамĕнчи 14-12-мĕш ҫурт килкартинчен

СЫСНА ТУХСА КАЙНĂ

шурă тĕслĕ, ҫурăм ҫинче хура паллăсем пур, 5 пăта йахăн пулат.

Пĕлекенсене ҫӳлти адрес тăрăх А.М. Иванована пĕлтерме ыйтаҫҫĕ.

ССР СОЙУЗĔН ГОСУДАРСТВĂ СТРАХОВАНИЙĔ

КОЛХОЗСЕМ

акнă тĕштырăсене, пăрҫалă тата технически културăсене; сат-пахчисене, ҫырла пахчисене, лашасене ĕнесене, ытти вак выҫăхсене, ҫурт-йĕрсене, хуҫалăхри еҫхатерĕсене тата ытти пурлăхсене

страхлама пултараҫҫĕ

Колхозсен, колхозниксен, уйрăм хуҫалăхлă хресченсен, рабочисен, служащчисен тата ытти граждансен пурлăхĕсене

ирĕклĕ йĕркепе отрахлама пулат.

Рабочисем, колхозниксем тата служащчисем
КИЛТИ ПУРЛĂХА СТРАХЛАМА ПУЛТАРАҪҪĔ.

Тĕрлĕрен справкăсем тата ăнлантарусем илме районсенчи тата хуласенчи страховой инспекцисене, савнашкалах Госстрах агенчĕсем патне тата Государствă страхованийĕн Чăваш республикинчи уйрăмне пымала.

Шупашкар хули, К. Маркс урамĕ, 12. Тел. № 2—76.

3—2

„Чăваш Коммунĕ" ҫырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алҫырăвĕсене кайала памаҫҫĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 1. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2601. Тираж 13780. [illegible]